№ 237 октябрь м-ц.

24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
СЕНТЯБРЬ
2
ЫТЛАРИКУН
206 (5921) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН
УКАЗĔ
Хĕрлĕ Çаран войсковой чăсĕсемпе соединенийĕсене СССР Союзĕн орденĕсемпе наградăласси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа хастарлăх кăтартнăшăн çаксене наградăлас:

ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ:

17-мĕш мото-стрелковăй полка.
355-мĕш стрелковăй полка.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ:

1-мĕш мото-стрелковăй дивизине.
57-мĕш танковăй дивизине.
46-мĕш гаубичнăй артиллери полкне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти августăн 31-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН
УКАЗĔ
Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçакĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин** орденĕ тата **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, çаксене **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Сержант **Беляев** Яков Дмитриевич.
2. Красноармеец **Дмитриев** Николай Михайлович.
3. Майор **Кузнецов** Дмитрий Иванович.
4. Капитан **Хигрин** Борис Львович.
5. Старший лейтенант **Чепурный** Николай Миронович.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти августăн 31-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН
УКАЗĔ
И. П. Середа красноармееца Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçакĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, Иван Павлович**Середа** красноармееца **Ленин** орденĕ тата **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти августăн 31-мĕш.

Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне СССР орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлани

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа хастарлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти августăн 31-мĕшĕнче кăларнă Указсемпе **Ленин** орденĕпе — 20 çынна, **Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе — 326 çынна, **Хĕрлĕ Çăлтăр** орденĕпе — 300 çынна, **«За отвагу»** медальпе — 287 çынна, **«За боевые заслуги»** медальпе — 87 çынна наградăланă. (ТАСС).

Совет войскисем Иранра малалла куçса пыни

Совет войскисем августăн 30-мĕшĕнче Зенджана, Решта, Шахруда йышăннă.

Совет войскисем августăн 31-мĕшĕнче Казвин, Сари, Шахи, Себзевар, Торбете-Хейдеви, Торбете-Шейха-Джам хулисене йышăннă. (ТАСС).

Англи войскисем Иранра малалла куçса пыни

ЛОНДОН, августăн 30-мĕш. Рейтер агентстви Симлăран Англи командованин коммюникине парать, вăл коммюникере çапла каланă: Иранран илнĕ сведенисем тăрăх, Иран войскисем хирĕç тăма пур çĕрте те чарăннă. Англи войскисем оккупацилеме районсенче положени хăвăрт йĕркене кĕрсе пырать. Халăх Англи войскисем çине тарăхни палăрмасть. Тегеранра пачах лăпкă, англичансен пурнăçĕ унта хăруша мар, тесе пĕлтереççĕ.

Иран войскисене Керманшахран илсе каяс ыйтăва Англи войскисен командующийĕ августăн 28-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен хăйне тивĕçлĕллĕн татса панă. Англи войскисем халĕ Керманшаха çитнĕ. Унта Англи подданнăйĕсен пурнăçĕ хăрушлăхра марри палăрнă.

Кăнтăрти секторта халĕ Англи войскисем Ахваза — Хафтихель районне пĕтĕмпех контроллесе тăрасçĕ. Августăн 28-мĕшĕнче Англи войскисене Корун шывĕ тăрăх тăвалла Ахваза илсе хăларнă тинĕс-çар карапĕсем халĕ, вăрçă ĕçĕсем чарăннă май, каялла таврăнаççĕ. Трансильвански чугунçулпа Иран чикки хушшинче Англи самолечĕсем листовкăсем пăрахнă. Инди чиккисен тăрăхĕнчи Хĕвелтухăç Иранри лару-тăру йĕркеллĕ. Мешхедран илнĕ сведенисем тăрăх, Иран войскисем Англи подданнăйĕсене кӳрентермеççĕ. (ТАСС).

* * *

ЛОНДОН, августăн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Симлăран коммюнике парать, унта çапла каланă: Керманшахра Иран флагĕпе Иран войскисен пысăк мар группине хăварма ирĕк панă, англичансемпе Иранăн вырăнти командованийĕ хушшинче тунă килĕшӳ тăрăх Иранăн тĕп вăйĕсене çав вăхăтрах нефть кăлараканран районсенчен илсе тухмалла.

Англи авиацийĕ çĕр çинчи вăйсене пулăшса пынă, Иран авиацине хирĕç операцисем тунă тата листовкăсем пăрахнă. Çапла вара, тĕнĕл держависем уçă хуласем çине бомбăсем пăрахнă тесе пĕлтернисем нĕтĕмпех суя халлапсем пулса тăрасçĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парне

ВĂРМАР. Районри чылай ялсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парне ярас ĕçе тытăннă. Нумай пулмасть, комсомол пуçламăш организацин секретарĕ В. Мясникова тата старший вожатăй Ф. Петрова юлташсем пуçарса янипе. Пысăк Енкассинчи вăтам шкул Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парне—140 штука карандаш, 37 штука сăмса тутри, 5 килограмм премĕк, 4 килограмм конфета, 40 пачка табак, 15 штука куçкĕски тата ытти те ячĕ.

Кĕтеснерти вăтам шкул та Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парне яма хатĕрленет.

Е. В.

Оборонăна тĕреклетме

ШАХАСАН. Ямашри «Ударник» колхоз членĕсем оборона фондне 18 центнер тĕштырă, 2 732 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. Колхозри комсомолецсемпе çамрăксем пуçарăнипе пĕр кун воскресник туса ирттернĕ тата 1.732 килограмм тимĕр-тăмăр пухса панă.

Колхозниксем халь авăн çапаççĕ. Государствăна центнер тырă лекса пачĕç.

А. КИРИЛЛОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 30-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 30-мĕшĕнче пирĕн войскасем пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлă çапаççусем туса пынă.

Тĕрĕс шута илнĕ тăрăх, августăн 27-мĕшĕнче немĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 41 самолет мар, 66 самолет пĕтерсе тăкнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, августăн 28-мĕшĕнче сывлăшри çапаççусенче немĕçсенне 29 самолет персе антарнă. Пирĕн çухатусем—10 самолет.

* * *

Ленинград патне пымалли çулсене сыхлакан совет летчикĕсем фашистсен авиацине архатса тăкмаллах пыра-пыра çапаççĕ. Августăн 27-мĕшĕнче пирĕн самолетсем противникăнне 23 самолет пĕтерсе тăкнă. Çав кун фашистсен истребительсем сыхласа пыракан бомбардировщикĕсем пирĕн аэродром çине пырса тапăкма хăтланнă. Анчах вĕсем совет самолечĕсене çĕр çинче чухне пĕрине те çитсе ĕлкĕреймен. Сывлăша шăп аэродром тĕлĕнчех çапаçу пуçланса кайнă. Пирĕн истребительсем немĕçсене хăюллăн атакăланă. Батальонăй комиссар Шалыганов çав çапаçура «Мессершмитт-109» йышши икĕ самолета персе антарнă. Виççĕмĕш самолетне старший лейтенант Яшин персе антарнă. Радченко майорăн подразделенийĕ те сывлăшра ăнăçлă çапаçусем туса пынă. Т. районĕнче противник бомбардировщикĕсен пысăк группине хирĕç çапаççа, çак подразделенири летчиксем—Кузнецовпа Жигулин лейтенантсем «Юнкерс» йышши пĕрер самолет персе антарнă. Лейтенант Дорофеев звени тăшмана хирĕç хăюллăн та паттăрăн çапăçнă. Летчиксем—Лазаревпа Косаренко лейтенантсем «Хейнкель» самолета атакăласа, вут тивретсе янă. Кун хыççăн Лазарев лейтенант «Юнкерс» самолета хирĕç тухса, тăшмана персе антарнă.

Августăн 27-мĕшĕнче совет летчикĕсем противник аэродромĕсем çине темиçе хутчен пыра-пыра çапнă. Капитан Зверевпа кĕçĕн лейтенант Шеликов икĕ «Мессершмитт» самолета, вĕсем аэродромран çĕкленсе кайма тăнă чухне, пĕтерсе тăкнă. Зверевпа Шеликов хыççăн пырса çитнĕ пирĕн истребительсем тата тăвăтă «Мессершмитта» вут тивретнĕ, тепĕр самолетне, вăл сывлăша вĕçсе хăпарма тăнă чухне, персе антарнă. Совет летчикĕсен икĕмĕш группи тăшманăн çичĕ «Мессершмитт» ларакан аэродромне пырса атакăланă. Аэродром тĕлĕнче немĕçсен виçĕ самолечĕ патруль пулса вĕçсе çӳренĕ. Фашистсен патрулĕ, ăна совет истребителĕсем пĕрре пырса атакăланă хыççăн, хăйсен аэродромне кӳтлĕкĕр хăваркă, пĕлтĕсем хушшине кĕрсе пытаннă. Пирĕн летчиксем çĕр çинче тăшманăнне 5 самолетне çунтарса янă.

* * *

Фронтăн хĕвеланăç енчи К. ялĕ çывăхĕнче пирĕн батальон артиллерине тата миномĕтсемпе вăйлатнă немĕç пехотин чăсне атакăланă. Çапăçу хирĕнче немĕç салтакĕсемпе офицерĕсенчен 300 çынна яхăн вилсе выртса юлнă. Совет боецĕсем пиллĕк оруди, тăвăтă миномет, пиллĕк пулемет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Старший лейтенант Калиниченко командир пулса ертсе пыракан зенитчиксен подразделенийĕ юлашки 11 кун хушшинче 24 самолет персе антарнă.

* * *

Сурçĕр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче Калашников полковникăн чăсĕ наступлени пуçласа янă. Противника йĕрлесе пырса, чăсри боецсем пĕр танк, икĕ оруди, пиллĕк пулемет, трактор, нумай винтовкăсем, артиллери снарячĕсем темиçе çĕр штука тата 5.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Нечаев краснофлотец разведкăран питех те кирлĕ сведенисемпе çĕрленсе юлса тавăрăннă, çав сведенисене çыранра тăвăтă километр шалта тăракан карапсем çине çийĕнчех çитермелле пулнă. Çыранра шлюпка пулман. Нечаев юлташ вара карапсем патне шыв урлă ишсе çитнĕ. Разведчик илсе çитернĕ паха сведенисем карапсен командованине боевой приказа пурнăçа кĕртме пулăшнă.

* * *

Украина партизанĕсем немĕçсен фашистла войскисене витĕмлĕн пыра-пыра çапас тесе пур майсемпе те усă курасçĕ. Житомир облаçĕнчи Черная Рудня районĕнче çапăçакан партизансен отрячĕ пулеметран персе фашистсен «Юнкерс-52» йышши транспортлă виçĕ самолетне персе антарнă тата немĕçсен 30 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Районри исполком председателĕ В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ юлашки вăхăтра немĕçсенне 200 автомашина тата фашистсен 50 мотоциклистне пĕтерсе тăкнă. Мĕнпур мотоциклсене партизансем хăйсен аллине тытса илнĕ. Отряд вĕçĕмрен ӳссе, немĕçсенчен тытса илнĕ хĕçпăшалпа пуянланса пырать.

В. хули хĕрринче Сянцов агроном командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ немĕçсен боеприпассем усракан пысăк складне пĕтерсе тăкнă. Склад территорине партизансем çĕрле пырса кĕнĕ. Шалти постсен часовойĕсене хăвăрт тата шăппăн вĕлернĕ. Партизансем склад алăкĕсене çĕмĕрсе, немĕçсен картишĕнче ларакан икĕ грузовикĕ çине патронсемпе гранатăсем тиенĕ. Унтан тĕп складсенчен пĕрин айне минăсем хунă. Пурне те туса çитерсен, партизансем боеприпассем тиенĕ грузовиксене хуларан темиçе километр аяккарах илсе тухса лартнă. Çак вăхăтра партизансен группине пĕрле юлнă отряд командирĕ бикфорд шнурне чĕртсе янă. Взрыв питех те хăватлăн кĕрлесе кайнă. Вăйлă çулăм складăн мĕнпур çурт-йĕрĕсене ярса илнĕ. Снарядсем, гранатăсем çурăлма тытăннă, патрон ящикĕсем взрыв пулса сирпĕнме пуçланă. Вут-çулăмра нумай пин снарядсем тата минăсем, патронсем тултарнă ещĕксем питĕ нумай пĕтнĕ.

* * *

Немĕçсен фашистла войскисем хăйсем тытса илнĕ ялсене халиччен тĕнче илтмен тискерлĕхпе çаратаççĕ, ялсемпе хуласенчи çынсене асаплантарса вĕлереççĕ. Киев облаçне кĕрекен Обуховски районри Красное ятлă ялта немĕçсем Иваненко колхозницăна, вăл хăйĕн юлашки сысна çурине немĕçсене паманăн кăна, персе пăрахнă. Петриков местечкинче фашистсем çичĕ çулти ачана амăшĕ куçĕ умĕнчех персе пăрахнă. Телейсĕр хĕрарăм ухмаха ерсе кайнă. Боброво ялĕнче немĕçсем мĕнпур хресченсене çаратса пĕтернĕ. Быстрова колхозницăне вĕсем ачасен урана тăхăнмаллийĕсемпе çи-пуçĕсене те муçтарса тухса кайнă. Мисин ялĕнче фашистла офицерсем мĕнпур хĕрсене-колхозницăсене немĕçсем ушă публичнăй çурта хăваласа пуçтарнă. Житомир облаçĕнчи Крошня тата Барышевка ялĕсенче немĕçсем 7 колхозницăна тата 3 колхозника персе пăрахнă. Каменец-Подольск хулинче фашистсем тĕрлĕ районсенчен бежене-еврейсене 400 çынна, пуринчен ытларах хĕрарăмсемпе ачасене, хăваласа килсе, пурне те персе пăрахнă.

* * *

Совет патриочĕсем, пуçарулăн та ăсхакăллăн ĕçлесе, фронта кирлĕ продукци кăларас ĕçе кунран-кун ӳстерсе пыраççĕ. Ленинградри заводсенчен пĕринче стахановла ĕç меточĕсен инструкторĕ, орденоносец Першин юлташ детальсем тунă чухне халиччен алă вăйăпе ĕçленĕ çĕрте машинăпа ĕçлемелле тунă. Норма тăрăх 34 минута вырăнне, калĕ вăл детале 2,5 минутăра туса çитерет. Ленинградри механически заводра ĕçлекен фрезеровщик Соколов юлташ приспособлени шухăшласа кăларнă, çав приспособлениле усă курса вăл детальсен ушкăнне 17 сехет хушшинче тăвас вырăнне, 35 минута хушшинче туса çитерет. Киров заводĕнчи цехсенчен пĕринче хăватлă мăлатуксем пушăмар пирки питех те кирлĕ детале туса кăларас ĕç чарăнтăнă. Вара рабочисем детальсене тунтаса тăвас вырăнне шăратса кăларма шутланă. Çакна пула мăлатуксемпе ĕçлесси кирлĕ мар пулса тăнă, ку çеç те мар, тата механически участоксенче 50 станока яхăн пушаннă. Тула заводĕнчи конструктор Ветров юлташ пĕр йывăр детале тăвас ĕçе автоматла майсемпе туса пымалла йĕркеленĕ. Çак мероприяти ĕç тухăçлăхне тăхăр хут ытла ӳстернĕ, нумай ĕç вăйне пушатса урăх ĕçе куçарма тата çур миллион укçа-тенкĕ перекетлесе хăварма, май пăнă. Молотов хулинчи Орджоникидзе ячĕпе тăракан заводра мастер Самараев юлташăн участокĕ, ĕçе çĕнĕлле майпа организацилесе, йывăр детальсен ушкăнне, норма тăрăх 215 сехет хушшинче юсас вырăнне, 7 сехет хушшинче юсаса ĕлкĕрнĕ.

Августăн 31-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапаçусем туса пынă.

* * *

Пирĕн разведка Германин пысăк чăсĕсем Д. юханшывĕ урлă каçмалли вырăн патне çывхарса пыни çинчен пĕлтернĕ. Переправăна пĕтерсе тăкма тата противникăн резервисене çĕмĕрсе тăкма Серегин майорăн авиачăсне янă. Пĕлтĕсем аялтанах хупăрласа тăни переправăна тупса палăртма чăрмантарнă. Самолетсем çинчен çутатакан ракетăсем тата вут чĕртсе яракан колонни çине бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă пирки противника юханшыв урлă каçма ирччен чарса тăнă, çав вăхăтрах командовани пирĕн чăссене çĕнĕлле йĕркелесе тăратма пултарнă. Ирхине переправа патне Царев капитан командир пулса ертсе пыракан бомбардировщиксен группи вĕçсе кайнă. Серегин майорăн летчикĕсем çĕрле вĕçсе пырса çапнă пирки пулнă сиенсене противник юсаса ситерейменни самолетсем çинченех курăннă. Тăшман виçĕ çине каллех тонни-тоннипе бомбăсем ӳкме пуçланă. Совет бомбардировщикĕсем пырса тапăннине сирсе яма хăтланнă немĕçсен виçĕ зенитнăй батарейине Лукьяненко капитан ертсе пыракан пикировка тăвакан бомбардировщиксен звени çĕмĕрсе тăкнă. Çапăн хыççăн фашистсем пулеметсемпе пăшалсенчен пеме пуçланă, анчах вĕсем пени нимĕнле результат та паман. Переправа патĕнче тăшман 25 çити танк, тĕрлĕрен калибрлă 20 оруди, 12 зенитнăй оруди çухатнă тата 3.000 салтакран кая мар вилнĕ е аманнă. Немĕçсене юханшыв урлă каçма паман.

* * *

Каштанов юлташăн артиллери чăсĕ юлашки ирне хушшинче тăшманăнне 28 оруди, 14 миномет, 18 танк, боеприпассем тиенĕ 5 автомашина, пехота тиенĕ 33 грузовой автомашина, штабăн икĕ автобусне тата фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çын ытла пĕтерсе тăкнă. Часть боецĕсем противотанковăй 6 тупă, икĕ оруди, 30 велосипед, станковăйпа ручной пулеметсем тата немĕçсен артиллери полк штабĕн документĕсене тытса илнĕ.

* * *

Фронтăн çурçĕр-хĕвеланăç енче старший лейтенантăн Ладудько юлташăн роти тăшман подразделенийĕсенчен пĕрине сасартăк атакăланă. Çапăçу хирне фашистсем вилнĕ 45 салтакпа 2 офицера, 6 пулемет, 9 автомат, танка хирĕç пемелли пăшалсем тата темиçе пин патрон пăрахса хăварнă.

* * *

«Стахановец» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем З. юлташ ертсе пыракан партизансен отрядĕнчи боецсене юнашар ялта немĕçсен чăсĕ пырса вырнаçни çинчен пĕлтернĕ. Ял хĕррине фашистсем маскировка туса 4 пулемет, икĕ противотанковăй оруди тата икĕ бронемашина вырнаçтарса лартнă. Отряд командирĕ З. юлташ немĕçсен чăсĕ çине тапăнма шут тытнă. Сĕрле отряд ял патне шăппăн пынă та, икĕ ушкăна уйăрăлса, яла хупăрласа илме пуçланă. Темиçе партизан ял хĕрĕнче мунча вут пĕртнĕ те, пăшалсенчен пеме пуçланă. Хăраса ӳкнĕ немĕçсем ял хĕрринелле орудисемпе пулеметсенчен пеме тытăнă. Çав вăхăтра партизансен тĕп вăйĕсем тăшмана пачах тепĕр енчен пырса çапнă. Аялти кĕпе-йĕмсем çеç тăхăннă фашистсем тĕрлĕ еннелле тарма тапратнă. Партизансем вĕсене пăшалсенчен персе тата гранатăсем ывăтса вĕлернĕ. Немĕçсен чăсне пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкса салатса янă.

* * *

Тыткăна парăннă немĕç салтакĕсем пурте фашистсен войскисем кашни кунах калама çук пысăк çухатусем тӳсни çинчен пĕлтереççĕ. 271-мĕш пехотнăй полкăн виççĕмĕш ротинчи ефрейтор Карл Лангребе каласа панă тăрăх, вĕсен ротинчи 160 салтакран 40 çын кăна юлнă. «Пур çĕрте те, — тесе каласа парать Лангребе, — эпир пушанса юлнă, çыннисем тухса кайнă ялсем витĕр тухатпăр. Акнă тырпулсене пĕтерсе тăкнă, выльăхĕсене хăваласа кайнă. Эпир çĕрулми те ниçта та тупаймастпăр... Пирĕн полкри салтаксем выçăпа аптăраççĕ. Çулсем тăрăх пынă чух пирĕн çине партизансем переççĕ. Коростень патĕнчи Романовка ялĕнче партизансем вунă салтак ытла вĕлерчĕç». Фронтăн кăнтăрхĕвеланăç енче салтаксен ашшĕ-амăшĕсем патне пĕлтерме полевой типографинче пичетлесе хунă стандартлă извещенисем панкине тупнă. «Киев патне пымалли çулсем çинче пулса иртнĕ çапăçусенче сирĕн юратнăывăлăр вилчĕ...» — çавнашкал сăмахсемпе пуçланаççĕ немĕçсем малтанах хатĕрлесе хунă пиншер извещенисем.

Вилнĕ тата аманă нумайĕш салтаксем çумĕнче тăван çĕршывне ямă ĕлкĕреймен çырусем тупнă. 99-мĕш пехотнăй дивизин 206-мĕш полкĕнчи виççĕмĕш ротăри ефрейтор Пауль Клаус 1941 çулти августăн 14-мĕшĕнче хăйĕн ашшĕ-амăшĕ патне çапла çырса пĕлтерет: «Российăри вăрçă операцин характерĕ Франциран пек мар, пачах урăхла. Сирĕнне тепĕр хут тĕлпулласси çинчен манăл шанăç сахал. Пирĕн полкăн çуррине хĕрлисем пĕтерсе тăкрĕç. Противник маскировкăна тĕплĕн тăвать. Войскăсем малалла куçса пылине палăртма май çук. Вырăссем — вĕсем чăтăмлă, çине тăрса çапăçакан тата чее противник. Вырăс салтакĕ французсен темиçе салтакĕ чухлĕ тăрать». Вилли Шредер салтак та Берлина хăйĕн пиччĕшĕ патне çавăн çинченех çырать: «Хаклă пичче, йывăр çапăçусенче вунă кун иртрĕ. Çавна эсĕ пурне те куçса тӳсе ирттернĕ пулсан — эсĕ хăрасах ӳкнĕ пулăттăн».

* * *

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче колхозниксем пирĕн çĕршывăн хулисенчи рыноксене продуктсем нумай илсе тухма пуçларĕç. 1940 çулти август уйăхĕнче танлаштарсан, халĕ Куйбышев тата Саратов хулисенчи рыноксене тулă çăнăхĕ улттă хут ытларах, çу — пĕрре çурă, хут ытла, çĕрулми — виçĕ хут ытла тухать. Ялхуçалăх артелĕсем Сталинградри рыноксене ашкакай, пахча-çимĕçсем тата фруктсем нумай илсе тухаççĕ. Воронцовски рынока базар пулнă кун «Красный Ахтубинец» колхоз хăех çĕршер килограмм купăста, чĕкĕнтĕр тата пăхулми сутма тухнă. Челябинскри рыноксенче те ялхуçалăх продукчĕсемпе сутуилӳ тăвасси чылаях вăйланнă. Хулари виçĕ рынокра кăна вунă кун хушшинче 460 центнер ытла аш-какай, 400 центнера яхăн çĕрулми, 68 центнер чĕкĕнтĕр тата ытти пахча-çимĕçсем сутнă. Тбилисири рыноксенче аш-какай, çу, сĕт, пахча-çимĕçсем тата фруктсем темĕн чухлех пулаççĕ. Продуктсен хакĕ чылаях йӳнелнĕ. Аш-какай хакĕ — 30 процент, çĕрулми хакĕ — 20 процент, вырăнта хатĕрленĕ сыр хакĕ — 15 процент чакнă. Хуласенчен колхоз ялĕсем валли промышленность таварĕсем нумай илсе пыраççĕ. Сталино облаçĕнче ялсенчи потребитель кооперацийĕ валли пуçма таварĕсем 4 миллион тенкĕлĕх, урана тăхăнмаллисем тата çĕленĕ кĕпе-йĕмсем 5 миллион тенкĕлĕх ытла тата трикотаж — чулха евĕрлĕ таварсем 2,5 миллион тенкĕлĕхе яхăн янă. Уйăхсенче, колхозсен бригадисенче вырăнтан-вырăна куçса сутса çӳрекен пунктсем 450 çĕрте тата вырăнтан-вырăна куçса çӳрекен ларексем 750 çĕрте организацилеме тата уйăрте 140 ларек уçнă.

Августăн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 31-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапаçусем туса пынă.

Пирĕн авиаци противникăн мотомехчăсене, пехотине артиллерине массăллăн пыра-пыра çапнă тата унăн аэродромĕсенче авиацине пĕтере-пĕтере тăкнă.

Августăн 29-мĕшĕнче сывлăшри çапаçусенче тата противникăн аэродромĕсенче немĕçсен 125 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 24 самолет пĕтнĕ.

* * *

Украинăри Т. хулинчи халăх ополченецĕсем çавтери хăватлă героизмпа паттăрлăх кăтартнă. Шуçăм çутти килнĕ чух хулана немĕçсен 8 танкĕпе 12 бронемашини çĕмĕрсе кĕнĕ. Урам тăрăх немĕн йĕркесĕр персе, фашистсен машинисем центральнăй площадь патнелле пынă. Шевченко урамĕнче танксемпе бронемашинăсем баррикада умне пырса тухнă, çав баррикадăна çу çапакан завод директорĕн заместителĕ Мотовиленко юлташ командир пулса ертсе пыракан ополченецсен взводĕ тунă пулнă. Машинăсем çине бензин тултарнă бутылкăсем тата гранатăсен çыххисем ывтăнма пуçланă. Пĕр танк тата икĕ бронемашина çунма тытăннă. Салтаксем машинăсем ăшĕнчен сикме тухнă, анчах вĕсем çăлăнса юлма пултарайман. Пулеметсенчен персе вĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Ытти танксем юнашар переулоксене кайнă, анчах вĕсене хирĕç те кунта хытă тăнă. Коцюбинский урамĕнче Лепилов лейтенантăн взводĕнчи боецсем виçĕ бронемашинăна стройран кăларнă. Икĕ машинăн экипажĕсем тыткăна парăлнă. Тăшманăн икĕ танкĕ Ивановски тупика пырса тăрăннă. Халăх ополченецĕсем тупикрен тухмалли вырăна сийĕнчех картласа лартнă та, тӳнтерсе янă юпасене вут тĕртнĕ. Каялла çавăрăннă танксем тăрмавсене орудисенчен персе çĕмĕрсе тăкма хăтланнă, анчах вĕсен çĕ тухман. Пĕр танкăн экипажĕ йывăç çуртсемпе сарăлса витĕр юнашар урама çĕмĕрсе [illegible] шутланă, анчах лакса ларнă. Иккĕмĕш танкăн экипажне ополченецсем пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ танк пĕртте сиенленмен. Слободская тата Песковская урамĕсенче танксемпе бронемашинăсем çине пирĕн регулярлăй войскăсем противотанковăй тупăсенчен пенĕ. Василипа Горлов лейтенантсен батарейинсем 2 танк тата тăвăтă бронемашина пĕтерсе тăкнă.

Темиçе сехет иртсен хулара лакса ларнă танксене пулăшма немĕçсем пехота колоннине янă. Хĕрлĕ Çар чăсĕсем тата халăх ополченецĕсем хулан хăюллăн сыхласа хăварнă. Баррикадасемпе пӳлсе лартнă почтамт ополченецсем немĕç пехотине вĕлерсе тăкнă. Урамра пулса çапаçу вăхăтĕнче темиçе хут штыксемпе атакăланă. Моторсакан завод умĕнче хĕрӳллĕ çапăлансе кайнă. Ополченецсен —

Малалли 2-мĕш страницăра.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳн вĕçĕ

рабочисемпе служащисен группи нимĕçсен икĕ атакине сирсе янă тата вĕсене завод патне пыма паман. Завод баррикади патне фашистсен салтакĕсем 100 сыннă çити вилсе юлнă. Шуçăм çути килнĕ чух пуçланнă çапăçу пĕр талăка яхăнах пынă. 1.600 ытла салтак, 6 танк тата 10 бронемашина çухатнă нимĕçсен ирĕксĕрех каялла чакма тивнĕ.

* * *

Совет летчикĕсем нимĕç фашисчĕсене хирĕç шиксĕр тата хăйсене хăйсем шеллемесĕр çапăçаççĕ. Ложечников майорăн тăхăр штурмовикĕ нимĕçсен транспорт самолетне асăрханă. Тăшман летчикĕ совет самолечĕсенчен тарса хăтăлма хăтланнă, анчах майор Ложечников фашиста хăваласа çитнĕ те, ăна аэродром çине ларнă вăхăтра персе вĕлернĕ. Тăшман хыççăн хăвалнă чухне майор аэродром çывăхĕнче тĕплĕн маскировка туса лартнă нимĕç машинисене курнă. Совет штурмовикĕсем противника çавăнтах атакăласа, фашистсен 18 самолетне пĕтерсе тăкнă. Старший лейтенантăн Кузнецов юлташăн звени нимĕçсен пĕр вырăнта тăракан 200 автомашини çине менĕ. Темиçе вунпар машинăна çунтарса янă тата сиенленĕ. Кĕçĕн лейтенантăн Симонов юлташăн звени нимĕçсен икĕ автоколоннине атакăласа, салтаксем тиенĕ 30 ытла автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

Çурçĕр фрончĕн летчикĕ капитан Краснолуцкий çапăсусенчен пĕринче «Мессершмитта» атакăланă, вăл хăйăн машинине тăрех фашист истребителĕ çине тытнă. Фашистсен летчикĕ юлашки секундăра тăссе тăма пултарайман. Хире-хирĕç пырса çапăнас мар тесе, вăл машинăна хăвăрт аяккалла пăрнă, анчах капитан Краснолуцкий ăна хăваласа çитсе «Мессершмитт» çине пырса тăрăннă. Фашистсен самолечĕ çĕре чул пек татăлса аннă. Краснолуцкий юлташ хăйĕн аэродромĕ çине чиперех анса ларнă.

* * *

Днепр юханшывĕн сылтăм çыранĕнчи Д. хули патне нимĕçсем танксен тата пехотăн шултра вăйăсене пухса тăратнă. Фашистсен саперний часĕсем Днепр урлă каçма васкасах переправа тума пуçланă. Совет артиллерийĕпе авиацийĕ нимĕçсем переправа тума хăтланнине икĕ кун хушши аркатаарката янă. Артиллери тата авиаци пенипе икĕ талăк хушшинче нимĕçсен саперĕсемпе пехотинецĕсем 1000 çынна яхăн вилнĕ; 50 танка çити, 6 зенитнăй батарея тата понтоннăй лодкăсем нумай пĕтерсе тăкнă. Виççĕмĕш кун вĕçленнĕ тĕле нимĕçсем юханшыв варри тĕлне понтоннăй кĕпер хывса çитерме пултарнă. Советăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсен эскадрильине çав кĕпере çĕмĕрсе тăкма приказ панă. Чи малтанах переправа патне кĕçĕн лейтенантăн Вдовенко юлташăн бомбардировщикĕ вĕçсе пынă. Самолет штурманĕ Гоманенко бомбăсене тĕл пăрахса 5 зенитнăй установкăна пĕрин хыççăн теприне стройран кăларнă. Пирĕн самолет çине тăшман артиллерийĕн вăйлăн пеме пуçланă. Çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра тăшман снарячĕн ванчăкĕ пирĕн бомбардировщика пырса тивнĕ. Самолет çунма пуçланă. Çакăн хыççăн хăюллă экипаж çунакан самолета парахмасăр юлнă бомбăсен грузĕпе пĕрлех противникăн понтоннăй кĕперĕ çине пырса тăрăнтарма шутланă. Самолет переправа çине пырса çапăнсан калама çук хăватлă взрыв кĕрлесе кайнă. Кĕпере арпа-кĕрпе пек аркатса тăкнă. Бомбардировщикăн геройла экипажĕ: кĕçĕн лейтенант И. Т. Вдовенко, штурман Н. В. Гоманенко, стрелок—кĕçĕн сержант М. Купатов тата стрелок-радист кĕçĕн сержант В. П. Карпов, тăшмана калама çук пысăк çухату тутарса, хăюллисен вилĕмĕпе вилнĕ.

* * *

Одесса облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче партизанла движени саралнăçемĕн сарăлса пырать. Юлашки эрне хушшинче партизансем Ширяево, Жовтень, Антоновка тата Демидово местечкисен çывăхĕнчи шоссе çулĕсем тăрăх куçса пыракан нимĕç транспортĕсем çине 20 хута яхăн пысăккăн пыра-пыра тапăннă. Совет патриочĕсем нимĕçсен пысăк калибрлă снарядсем тиенĕ 47 грузовой автомашинине, бензин тултарнă 27 цистернине тата продовольстви тиенĕ 42 утлă повозкине пĕтерсе тăкнă. Мотоколоннăсемпе обозсен охранине хирĕç пулса иртнĕ çапăçусенче фашистсен 120 салтакне ытла вĕлернĕ.

Ялти клуб заведующийĕ А. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ августăн 27-мĕшĕнче Ширяевопа Ульяновка хушшинче нимĕçсен снарядсем тиенĕ 8 машинăран тăракан автоколоннине сыхласа выртнă. Çула чулсемпе тата пĕренесемпе картласа, партизансем засада туса пытаннă. Нимĕçсем картласа лартнă çул патне пырса çитсен, залп кĕрлесе кайнă. Конвоирсем вăрмана тарса пытанма хăтланнă, анчах пурте тенĕ пекех партизансен аллине лекнĕ. Автомашинăсене взрыв туса аркатса тăкнă хыççăн, партизансем тарса пытаннă.

Совхоз зоотехникĕ Ф. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрядĕнчи разведчиксем Антоновкăра пурăнакан çынсене асаплантарма Жовтеньрен «СС» текен фашистла отряд тухса кайнине палăртнă, Антоновкăра пурăнакансем советăн вырăнти руководителĕсене тытса пама тата Германи çарĕ валли продовольстви парасси çинчен нимĕçсен командованийĕ кăларнă приказа çурăçа кĕртме килĕшмен пулнă. Карательсен отрядне Антоновкăран 10 километрта пĕр айлăмра кĕтсе илнĕ. Партизансем гитлерла бандитсем тыракан автомашинăсем çине кĕтмен çĕртен пеме тытăннă. Нимĕçсем автоматсенчен персе ответленĕ. Хирехирĕç хаярăн персе тăнă хыççăн нимĕçсен 40 салтакне ытла вĕлернĕ. Ытти нимĕçсем çăлăнса юлнă автомашинăсем çине ларса каялла Жовтене тарнă.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух сĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăсусем туса пынă.

* * *

Çурçĕр фрончĕн Н-ски участокĕнче совет полкне хирĕç çапăçма тăшман нимĕçсен «СС» текен дивизине тата белофинсен бригадине кăларса янă. Красноармеецсем хăюллăн хÿтĕленнĕ тата нимĕçсен командованийĕн мĕнпур планĕсене аркатаарката янă. Пирĕн полк çумне часах тепĕр часть пырса пĕрлешнĕ. Совет войскисем хирĕç тăрса çапăçасси вăйланнă. Тÿрех пырса оборонăна çĕмĕрес шанчăка çухатнă хыççăн, фашистсем пирĕн чассенчен пăрăнса иртме шутланă. Шурлăхем тата чăтлăх вăрмансем урлă белофинсен полкĕ пирĕн тыла пырса тухнă та, шоссе çулне татса илнĕ. Çапла тунипе пирĕн боецсем хушшинче паника пуçласа яратпăр тата хăратса ÿкеретпĕр, тесе шутланă фашистсем. Анчах та тăшман ĕмĕтленни пурнăçа кĕмен. Тавраллах оборона организацилесе, красноармеецсем противникăн мĕнпур атакисене сире-сире янă. Çак вăхăтра çапăçу пыракан вырăна пирĕн подкрепленисем пырса çитнĕ. Дричкин юлташăн подразделенийĕнчи боецсем маршпа пынă çĕртен тÿрех çапăçма тытăнă та, хаяр тытăçура противника сирсе ывăтнă. Вăйлăн ласкаланă финсен полкне кÿлĕ патне хĕссе лартнă. Евсеев командирăн подразделенийĕнчи боецсем унăн флангне пырса тухнă. Халĕ ĕнтĕ финсене хăйсене йĕри-тавра хупăрласа илнĕ. Татăклă атака туса совет войскисем белофинсен полкне йăлтах çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн тыла пынă 2.000 фашистла салтакран хупăрласа илнĕ çĕртен 600 çынран ытла мар тухса кайнă. 40 ручной тата станковăй пулемет, нумай минометсем, винтовкăсем тата ытти çар снаряженине турттса илсе пĕтерсе тăкнă. Тытăнма пекнĕ капрал Харламо Юго Вилго калама пăнă тăрăх, «ротăсен командирĕсем пуçтах пекех стройран тухнă. Нумайĕш отделенисенче 12 салтакран 2—3-шер салтах çеç тăрса юлнă».

* * *

Карело-Финн республикин хăшпĕр районĕсене тытса илнĕ нимĕçсемпе белофинсен войскисене партизансен отрячĕсем пĕр канăç та памаççĕ. Партизансене хирĕç кĕрешме фашистла командовани чылай пысăк вăйсем янă, çулсене, кĕпersене, складсене сыхласа çине вăйлатнă, анчах та нимĕнрен хăраман партизансем тăшманăн вăйсăр вырăнĕсене шыраса тупса, ăна чылай вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. К. ялĕнче белофинсен пысăк мар гарнизонĕ вырнаçса тăнă. Л. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ çĕрле белофинсене йĕри-тавра хупăрласа илнĕ те, вĕсем çине кĕтмен çĕртен тапăннă. Партизансем тăшманăн 20 салтакне вăрлă продовольстви складне пĕтернĕ, икĕ пулемет тата темиçе винтовка тытса илнĕ. М. юлташ командир пулса ертсе пыракан взвод отрячĕ противник Н. ратне мотомехчасть илсе пыма пани çинчен сведенисем илнĕ. Взвод группи кĕске срок хушшинче çула утса тухса, финсен тăнă çитнĕ те, противник войпыракан çул çинчи кĕпере туса аркатса тăкнă. Тăшман чарăннă. Çак отрядри парти тепĕр группи нумай вырăн телеграф линине пĕтерсе тăкнă

Чунхавалне тата «хăюллăхне» çĕклес тесе Германи фашисчĕсем хăйсен салтакĕсене эрех ĕçтереççĕ, вĕсене наркотиксем параççĕ. **Унерчĕн çинче:** фашистла бандăсене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, красноармеецсем нимĕçсем окопсем патне пăрахса хăварнă эрех хĕленчисене тата снаряженине пăхаççĕ.

П. Берштейн фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС).

Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ

Малтанхи кун

КАНАШ, сентябрĕн 1-мĕш. (**«Чăваш Коммуни» корр., телефонпа**). Хулари 2-мĕш номерлĕ вăтам шкула 9 сехет тĕлне ачасем пуçтарăнса çитрĕç. Кашниех праздник чухнохи пек илемлĕ çи-пуçсем тăхăннă. Пĕр-пĕрне алă тытаççĕ, каникула мĕнле иртнине çинчен пăйтса пĕлеççĕ.

Пирвайхи звонок пулчĕ. Ачасем классене кĕрсе ларчĕç. Акă эпир иккĕмĕш класа пырса кĕтĕмĕр. Унта учительница Мартынова юлташ пырса кĕчĕ.

— Здравствуйте, ребята!

Ачасем пурте ура çине тăрса ответлеççĕ.

— Халĕ тĕрĕслесе тухăпăр, ученикссем пурте килсе çитнĕ-и?—Вăл список тăрăх тĕрĕслет. Ачасем пĕрин хыççăн тепри хăйсен ячĕсемпе хушамачĕсене каласçĕ. Унтан учительница хăçал шкула çĕнĕрен пынисене тĕрĕслет.

Мартынова юлташ çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнине çинчен пĕлтерет.

— Каникул вăхăтĕнче эсир лайăх кантăр, хăвăр сывлăхăрсене çирĕплетрĕр. Каникула кайнă вăхăтра пирĕн çĕршыв мирлĕ саманапа пурăнатчĕ. Акă халь виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ вăрçа пырать. Германи фашизмĕ пирĕн таван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăнса вăрçа пуçларĕ. Пирĕн класра вĕренекен хăшпĕр ачасен ашшĕсем тата пиччĕшĕсем фронтра сапăçаççĕ. Кăçал нихçанхинчен те лайăхрах, тăрăшса вĕренмелле пулать. Дисциплина Хĕрлĕ Çар боецĕсенни пек çирĕп пулмалла. Эсир лайăх вĕреннине сирĕн тăванăрсем савăнччăр.

Учительница ачасем шкулта тата шкул тулашĕнче хăйсене мĕнле тытаклламалли çинчен тепĕр хут аса илтерчĕ.

Вĕренӳ çулĕ организованно пуçланчĕ.

Ултăмĕш шкулта

Ачасем ытти кунсенчинчен нумай малтан вăраннă. Вĕсем васкасах çăвăннă, уяврн пек капăр тумланнă. Пурин те пĕр савăнăçлă шухăш — паян вĕренӳ çулĕ пуçланать!

Сакăр сехетрех вĕсем кĕнекесем, тетрадьсем илсе шкула пухăннă. Пĕрпĕрне хăйсем çуллахи каникула мĕнле ирттерни çинчен каласа параççĕ. Звонок. Ачасем класа йĕркеллĕн кĕрсе вырнаçаççĕ.

Учительсемпе вĕренекенсем тăрăшса ĕçленипе шкулăн çĕнĕ çуртне вăхăтрах хатĕрлесе çитерчĕç. Ачасем класс стенисене те илемлетме ĕлкĕрнĕ. Классем таса.

Тăхăр сехетре лăпах уроксем пуçланчĕç. Эпир иккĕмĕш класа кĕтĕмĕр. Ачасем çуллахи вăхăта çавăнăçлăн та сывлăхлăн усăллă ирттерни класа кĕрсенех курăнса каять. Пурте таса, хавас, хĕвелпе пиçнĕ.

Учитель ытăвне ачасем питех те чĕррĕн ответлеççĕ. Пурте алăсем çĕкленççĕ. Анчах вĕсен пĕр çитменлăх пур — ура çинче тăма пĕлмеççĕ. Çавтери юн вĕресе тăрать иккен вĕсен.

1-мĕш урок пĕтрĕ. Ачасем ушкăнĕ-ушкăнĕпе пухăнса калаçса тăраççĕ.

Вĕсене вăрçă ĕçĕсем интереслентереççĕ.

—Эпĕ виçĕ пăт тимĕр-тăмăр пухарăм, — тет пĕр пионер. — Пирĕн урамри ачасем пурте пекех пухнă. Эпир фронта çапла пулăшатпăр.

— А эпĕ авиабомбăсене хирĕç мĕнле кĕрешмелли çинчен пĕтĕмпех вĕрентĕм, халĕ ПВХО нормине пама хатĕрленетĕп, — тет тепри.

Каласу хĕрÿллĕ. Хăшĕ красноармеец семьисене пулăшни çинчен, хăшĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парнесем яни çинчен каласçĕ.

Шкулта оборона ĕçне вăйлатнă. Учительсем пурте ПВХО нормисене панă. Ачасем те чылайăшĕсем норма панă, юлнисем çак кунсенчех хатĕрленсе çитеççĕ. Халĕ тата маскировка тăвас ĕçе йĕркелеççĕ.

Шкулти пур предметсемпе те плансем тата расписанисем туса çирĕплетнĕ. Уроксем интереснă иртеççĕ.

В. ПОРФИРЬЕВ.

Пысăк хаваслăх

Ачасем ку куна хавасланса кĕтсе тăнă. Çуллахи вăхăтра лайăх ханса сывлăха çирĕплетнĕ хыççăн, вĕсем часрах вĕренме тытăнас мăлпа çуннă.

Çавăнпа та сентябрĕн 1-мĕшĕ умĕн ачасем хăйсене кирлĕ кĕнекесене, тетрадьсене, вĕренӳ хатĕрĕсене малтанах хатĕрлесе хурса, çав кун ирхине ирех шкулалла чупнă.

Эпир Шупашкарти 3-мĕш №-лĕ шкул умĕнче тăратпăр. Ир-ха, сакăр сехет те çитеймен. Анчах ачасем пухăнма тытăннă та ĕнтĕ.

— Çичĕ сехетрех килме пуçларĕç вĕт паян, — тет пире шкул директорĕ Иварбеев юлташ.

Ачасем пурте питех те тирпейлĕ тумланнă. Вĕсенчен нумайĕшĕ паян пĕрремĕш хут шкул алăкĕнчен кĕреççĕ вĕт-ха, парта хушшинче пуçласа ларасçĕ!

Кĕçех шкул патнелле 15—20 ача пĕрле утса пыни курăнчĕ. Стройпа, хĕрлĕ ялавпа.

— Ачасен садĕнчен килеççĕ, — терĕ тахăшĕ. — Пĕлтĕр вĕсем сада çÿренĕ, кăçал — шкула.

Ĕнтĕ, тăхăр сехет сывхарать. Пĕрремĕш сменăра вĕренмелли кĕçĕн классем пухăнса çитрĕç. Вĕсене шкул килкартине чĕнсе кĕртеççĕ. Кунта çак пĕчĕк çынсен пĕчĕк митингĕ пулса иртет. Шкул директорĕ кĕске кăна сăмах каласан, ачасем кăçалхи вĕренӳ çулĕнче «отлично» паллăпа кăна вĕренме сăмах параççĕ. Ачасен садĕнчен стройпа килнисен ячĕпе пĕчĕкçеç Русс калать:

— Эпир, ача садĕнчен килнисем, пур тĕлĕшрен те примерлă пулма, малта пыма пулатпăр!

Звонок... Класнăй руководительсемпе учительсем ачасене хăйсен класĕсене ертсе каяççĕ.

Пур çĕрте те тап-таса, çутă, кăмăллă. Кирлĕ ремонта вăхăтра тата тĕплĕн туни палăрать. Кашни класрах чечексем — вĕсене вĕренекенсем хăйсем пыра-пыра лартнă.

Вĕренекенсем хăйсен шкулне çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли вăхăтра, лайăхăн хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе кăçал нихçанхинчен те тăрăшарах ĕçленĕ. Темиçе субботник туса ирттернĕ.

Шкулăн маччи çине тăпра хăпартма кирлĕ пулнă. Комсомол организацийĕ чĕннипе, аслă классенче вĕренекенсем мачча çине 1000 витре таран тăпра хăпартнă.

Шкул ăшчиккине штукатурить тунă чухне чÿрече кантăкĕсем, урайсем вараланнă. Аслă классенче вĕренекен хĕрачасем вĕсене çуса тасатнă.

Шкулăн вутă нумай, анчах ăна татмалла. Вĕренекенсем, учительсемпе пĕрле, пĕр кун хушшинче 50 кубометр таран вутă татса хунă.

Килкартине сÿп-çапран шăлса тасатнă.

Çак пур ĕçсенче те уйрăмăнах шкулти комсомол организацин секретарĕ Рита Шипунова, аслă классенче вĕренекенсем Това Краснощеков, Лева Горелов, Коля Рукавишников, Нинăпа Валя Смирновăсем т. ыт. чĕререн тăрăшса ĕçленĕ. Вĕсем хăйсем ĕçленĕ кăна мар, хăйсен юлташĕсене те чĕнсе пухса çÿренĕ, вĕсене агитациленĕ.

Шкул директийĕ, учительсем, вĕренекенсем тăрăшса ĕçленипе шкул вĕренӳ çулне пур енĕпе те хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Çавăнпа та вĕренӳ çулне ăнăçлăн пуçласа яма май килнĕ.

Л. АГАКОВ.

Ачасем ирех пухăнчĕç

— Ирхине çичĕ сехет иртсенех шкул алăкне шаккама тытăнчĕç, — тет Шупашкарти М. Горький ячĕпе тăракан 2-мĕш №-лĕ шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Дмитриева юлташ. — Вĕренекенсем сехете айăплама тытăнчĕç. Сирĕн сехетĕр кая юлнă, пирĕнпине кĕçех тăхăр çитет, теççĕ.

Чăн та, çак шкулта вĕренекенсем паян классене пурте заняти пуçланичнчен тахçанах малтан çитнĕ. Пĕрисем çĕнĕ учебникссене пăхкаласа ларасçĕ, теприсем учительсем килессе кĕтсе, шкул кĕтессинчен кая-кал пăхаççĕ. Кашниннех часрах вĕренме тытăнас килет.

Иккĕмĕш номерлĕ шкул вĕренĕвĕпур енчен те хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Кашни вĕренекенĕн кирлĕ кĕнекесем, вĕренӳ хатĕрĕсем пур. Шкулăн картинăпе умне пĕр çÿнĕ хăвармиччен тенĕ пек шăлса тасатнă. Кашни класрах йăлтăртатса тăракан доска, наглядăй пособисем...

Ф. УЯР.

Уйхирте ĕçлесе пиçĕхнĕ хыççăн

ÇĔРПУ. Çуллахи вăхăтра колхоз уйхирĕсенче ĕçлесе хĕвел çинче пиçĕхнĕ ачасем хĕвел тухнă-тухманах шкулсене пухăнма тытăнчĕç. Шăп тăхăр сехетре вĕсем партăсем хушшинче вырнаçса ларчĕç. Яланхи пекех çирĕп расписанисем тăрăх занятисем пуçланчĕç.

Районри вăтам, туллимар вăтам тата пуçламăш шкулсене — пĕтĕмпе 50 шкула 8.298 ача пухăнчĕ. Шкул тулашĕнче пĕр ача та юлман. Çавăн пекех пур шкулсенче те учительсем çителеклĕ.

Çĕрпÿ педучилищинче 13 класра 470 çын вĕренет. Пĕрремĕш класа çĕнĕрен 105 çын илнĕ. Пулас учительсем вĕренӳ çулне нихăçанхи пек те мар организованно пуçларĕç.

Çавăн пекех фельдшерсен шкулĕнче те вĕренӳ ĕçĕ пысăк хавхаланупа пырать. Кунти медсестрасен отделенине çĕнĕрен 70 çын вĕренме илнĕ.

Кăçал, отечественнăй аслă вăрçăн кунĕсенче, шкул ачисем татах та лайăхрах вĕренме, тăван çĕршывăн усăллă çынсем пулассишĕн татах та ытларах çине тăрса ĕçлеме сăмах параççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Иран халăхĕ совет войскисене саламласа кĕтсе илет

ТАВРИЗ, августăн 30-мĕш. Совет чиккисенчен пуçласа малалла куçса пынă çĕрти пĕтĕм çул тăршшĕнче Иранри хулисемпе ялсенче пурăнакансем Хĕрлĕ Çара ăшшăн саламласа кĕтсе илеççĕ.

Совет Союзĕпе Великобритани пĕрле тăвакан ĕçсене Иран халăхĕ ăнланса, тĕрĕс хакланине вырăнти халăхпа малтанхи хут тĕлпулусемех кăтартса пачĕç. Иранецсем нумайĕшĕ хăйсем Хĕрлĕ Çара тата Совет Союзне хăмăллашшине кăтартса пама пур майсемпе те тăрăшаççĕ.Совет правительстви Иран правительстви патне ялă нота çинчен Иранри йышлă халăхсем пĕлсе тăраççĕ.

Хемарлу ялĕнче 300 çын ытла красноармеецсене кĕтсе илме пухăннă. Юлташла калаçура çав ялта пурăнакансем хăйсем Хĕрлĕ Çара тата Совет Союзне пĕтĕм кăмăлран хисеплени çинчен каласа панă. Келла ялĕнче ачасем красноармеецсене виноград илсе тухса панă. Алучжуджи ялĕнчи хресченсем красноармеецсене хăйсемпе пĕрле апатланма чĕннĕ.

Вĕсем пурте хăйсем нимĕçсене курайманни çинчен, нимĕçсем Иран халăхне унта туслă Совет Союзĕпе Великобритание хирĕç вăрçа кĕртсе ялă хăтланнисем çинчен каласа кăтартаççĕ. Пехлеви портĕнчи служащи каласа панă тăрăх, нимĕçсем чылай пунктсенче шпионла ĕçсем туса пымалли йăвасем çавăрнă: суту-илÿ тăвакан фирмăсем ячĕсемпе витĕнсе, нимĕçсем унта нумай хĕçпăлан тата взрыв тумалли япаласем турттарса пырса тултарнă. Шпионла сведенисене нимĕçсем усçăнах пуçтараса çÿренĕ, уйрăмăнах вĕсем Советăн Каспири флочĕпе хытă интересленнĕ.

Нумай ялçыннисем каласа кăтартнă тăрăх, нимĕçсен Иранри агенчĕсем хресченсене: Германи войскисем Закавказьери хăшпĕр хуласене турттса илнĕ те ĕнтĕ, тесе суйса çÿренĕ. Çавнашкал намăса пĕлмесĕр суйса, нимĕç агенчĕсем Иран халăхне хăратса ÿкерешĕн пулнă.

Анчах та эпир Совет Союзĕн çитĕнĕвĕсене ялатах савăнса сăнаса пынă, фашистла вăрă-хурахсене тата авантюристсене хирĕç кĕрешес ĕçре пире Хĕрлĕ Çар пулăшу парасса шансах тăнă, — тесе каласа параççĕ нумайĕшĕсем. — Совет Союзĕ, хăй тунă договора нихçан та пăсманскер, хăйĕн обязательствисене ку хутра та пурнăçа кĕртес пирки, Иранра нимĕç фашисчĕсем тăшманла ĕçсем тунипе пулса тăнă хăрушлăх иртсенех, Совет Союзĕ хăйĕн войскисене Иранран илсе тухса каяс пирки пирĕнтен нихăшĕ те иккĕленмест.

Вырăнти çынсем Хĕрлĕ Çар часĕсене савăнăçлăн кĕтсе илеççĕ тата боевой заданисене пурнăçа кĕртме пулăшаççĕ. Час-часах ваттисем те, çамрăксем те халăх пурăнакан сывăхри вырăна çитме çул кăтартса пама Хĕрлĕ Çар часĕсемпе пĕрле пыраççĕ. Хуласемпе ялсенче пурăнакан çĕршер çынсем, подразделенисен командирĕсем патне пырса, хăйсем пулăшма шут тытни çинчен пĕлтереççĕ.

Хĕрлĕ Çар йышăннă хыççăн шур хуласемпе ялсенче те çийĕнчех йĕркеллĕ пурнăç пуçланса каять, магазинсене уçаççĕ, базарсенче суту-илÿ пуçланать. (ТАСС).

Польша халăхĕ гитлеровецсене хирĕç кĕрешни

ЖЕНЕВА, августăн 30-мĕш. (ТАСС). Ĕçлеме янă вырăнтан Германирен тарса тухнă Польшăн темиçе рабочийĕ кунта килнĕ. Тарса килнисенчен пĕри, Краков хулинчи Т. рабочи çапла каласа парать: «Польша халăхĕ мĕн тÿснине каласа пама та йывăр. Мораль енчен хĕстерсе çитернисĕр пуçне, нимĕçсем поляксене вĕлерсе пĕтерес тĕлĕшпе пурне те туса пыраççĕ. Поляк гестапо аллине лексен, унтан чĕрĕ сайра тухать, кама та пуласан унтан тухма май килсен, вăл вара аманса юрăхсăр пулса тухать. Нимĕçсем долгоссенче калама çук асаплантараççĕ. Ĕçе янă вырăнсенче поляксене пĕтересси массăллăн пулса пырать. Ĕçленĕ чухне кăна мар, пушă вăхăтра та юриех тÿсме çук йывăр условисем тăвас тесе поляксене пĕрмаях пурăннă вырăнсенчен хăваласа илсе каяççĕ. Германие ĕçлеме илсе каякан поляксем пуринчен те ытларах асап тÿсеççĕ. Унта пĕр çултăлăк — çултăлăк çурăра поляк рабочийĕн вăйне йăлтах пĕтермелле тунă. Талăкра 18—20 сехет ĕçлеттереççĕ. Эпир Германире 8 уйăх пулнă çынсене куртăмăр. Вĕсенчен этемсен мĕлкисем çеç тăрса юлнă.

Калама çук пусмăрласа çитернĕ пулсан та, Польша халăхĕ нимĕç оккупанчĕсем умĕнче пуç усмасть. Польша халăхĕ асапсем курни унăн çĕнтерÿ патне пырассин чăтăмлăхне çирĕплетрĕ. Польша халăхĕ юнлă фашизма хирĕç таса вăрçа çĕкленчĕ. Нимĕçсем Польшăри лару-тăрура хăйсене хуçасем пек туйса тăма пăрахса пырараççĕ. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх нимĕç гарнизонĕсене вăйлатнă. Пысăк хуласенче те нимĕçсем çĕрле пĕчченшерĕн тухса çÿреме шикленеççĕ. Нумай пулмасть нацистла партин Польшăри пурăнакан членĕсен съезчĕ пулса иртнĕ. Съездра поляксем хирĕç тăрассине çĕмĕрсе тăкма мерăсем йышăнасси çинчен сÿтĕсе явнă.

Канаш деповёнчи комсомолецсен бригади (9 сын) августăн 17-мĕшĕнче пулнă воскресникре 17 сехет хушшинче паровоза юсаса ситернĕ, ĕçлесе илнĕ ĕç укçине оборона фондне панă. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): лараççĕ—С. Жигунов, Н. Чеботарев, тăраççĕ—Ф. Петров, И. Ефремов юлташсем.

Е. Цыганов фотоўкерчĕкĕ.

Комсомолецсем

Рабочисем канма килĕсене саланнă хыççăн нумай та иртмен, депона тепĕр паровоз килсе ситнĕ. Вăрăма ямасăр, кĕске срокра юсаса кăлармалла пулнă ăна. Депо начальникĕ Прокофьев юлташ çакăн çинчен дежурнăйсем урлă рабочисене пĕлтерет. Комплекслă бригадăн бригадирĕ Черкасов, мастер Лотошников тата бригадăри ытти рабочисем часах килсе ситсе, хăйсем ĕçлекен вырăнсене йышăнаççĕ. Çурçĕр иртни виçĕ сехетре тытăнса, кăнтăрла 12 сехетре паровоза юсаса та кăлараççĕ. Паровоз çавăн чухнех кирлĕ грузсем тиенĕ поезда кăкарса тухса каять. Норма тăрăх илсен, çак паровоза юсама сахалтан та 14 сехет кирлĕ пулнă.

Августăн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ çак ĕç. Ун пек фактсем паллах час-часах пулаççĕ кунта. Кашни кун, кашни сехет çĕнтерӳ тунипе паллă пулса юлать. Рабочисем нихăçан пулман пысăк хастарлăхпа ĕçлесе, хамăр тăван çĕршывăн вăй-хăватне татах та ытларах çирĕплетме пулăшаççĕ, фашистла çынçиенсен вилĕмне çывхартаççĕ.

Пĕр уйăх каярах Совет Информаци Бюровĕ депо коллективĕнчи патриотсен мухтавлă ĕçĕсем çинчен пĕлтерчĕ. Унта эпир производствăра чылайранпа ĕçлекен специалистсен хушамачĕсене те, пĕр-ик çул каярахпа кăна ĕçе килсе кĕнĕ çамрăк рабочисен хушамачĕсене те тупса вулатпăр. Золотухин — старший слесарь-арматурщик. Вунултă çул тултарнă комсомолец Ефремов унăн подручнăйĕ. Вăл икĕ çул каярах кăна ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Пĕтĕмпех хăйне вĕрентекен юлташĕ пек пулма тăрăшать. Заданине 180—200 процентран кая мар тултарать.

Белофинсене хирĕç пынă çапăçусен участникĕ, комсомолец Чеботарев юлташ та нормăна 175—180 процентран кая мар тултарать. Çавăнпа пĕрлех вăл обществăллă ĕçе те активлăн хутшăннă. Канаш узелĕнчи комсомол комитечĕн секретарь заместителĕн ĕçĕсене кирлĕ пек туса пырать. Слесарь-дышловик Чеботарев юлташ пекех, Петров юлташ та нормăна ытлашшипех тултарса пырать.

— Электросварщик Жигунов юлташ пирĕн. двухсотниксенчен пĕри, — теççĕ депори начальниксем. Чăнах та комсомолец Жигунов нормăна нихăçан та 200 процентран кая тултармасть.

Депора паха тĕслĕх кăтартса ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем сахал мар. Ывăнма та пĕлмеççĕ. Тăван çĕршыва тивĕçлĕ пулма тăрăшаççĕ.

Т. МАЙОРОВ.

Канаш.

Хĕрлĕ Çара пулăшма

ШАМАРША. Палтиелĕнчи «Кзыл юл» колхоз членĕсем фронтри боецсем патне парнесем яраççĕ. Çак кунсенче С. Уткина, А. Азисова, С. Валиуллов, М. Чумакова алшăллисем пачĕç.

Çĕнĕ Шăмăршăри «Новая деревня» колхозăн членĕсем хăйсен пухăвĕнче оборона фондне 174 ĕçкунĕ пама йышăннă, вăл ĕçкунĕсемшĕн тивекен тырра çак кунсенчех «Заготзерно» пунктне ăсатаççĕ. Кунсăр пуçне çăмарта, укçа тата алшăллисем пухса панă.

Районри ĕççыннисем оборона фондне укçан тата заем облигацийĕсем параççĕ. Августăн 12-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче 2565 тенкĕ панă. Вăл шутран пенсионер Садмуллин 1000 тенкĕ тата Куцыпина 750 тенкĕ облигаци панă.

Карабай-Шăмăршăри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 500 ĕçкунĕ панă. Петров колхозник 24 ĕçкунĕ, Ф. Семенова, Купташкина, Арбузов, Филиппов колхозниксем 15-шер ĕçкунĕ пачĕç. Анат-Чапкасри Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем 150 тенкĕ укçа пухса панă. Палтиелĕнчи учительсем колхозра 5-шер ĕçкунĕ туса оборона фондне пама пулчĕç, кунсăр пуçне пĕр кунхи ĕç укçине фашизма çĕнтерекенех парса тăма пулчĕç.

Д. ОБОФОРОВ.

Çамрăклăх

Çамрăклăх — ĕмĕр çамрăк, теççĕ. Сын ватăлнăран мар ăна çапла калаççĕ. Çынсем ăру хыççăн ăру ватăлнă—çамрăклăх нихăçан та ватăлман. Çынсем вилнĕ — çапла пурнăç законĕ, çамрăклăх — ĕмĕр-ĕмĕр çамрăк, вăйлă, вĕри. Вăл хĕрешнĕ, çапăçнă — пур çĕрте, пур чухне те вăл сĕнтернĕ. Ни вилмен вăл, ни ватăлман. Юрри те унăн хăй пекех — ĕмĕр çамрăк, ĕмĕр çĕнтерӳ çинчен.

Пирĕн аттесен çамрăклăхĕ, калăпăр, патшана персе пăрахнă, Врангеле тинĕсе хуса кĕртнĕ. Пирĕн пиччесен çамрăклăхĕ ĕмĕрсем хушши пирченпирченĕ ларнă чуллă çăртсене шăтара-шăтара кĕнĕ, чăтлăх вăрмансенче завод-гигантсем, хуласем çитĕнтернĕ, чунсăр пушхирсене чун кĕртнĕ — чеченлентернĕ. Паянхи çамрăксен çамрăклăхĕ чи тискер, чи хаяр та усал тата вăйлă тăшманпа тĕл пулса тытăçмалла пулчĕ. Ĕмĕрхи пекех, çамрăклăх — çамрăк, вăйлă, вĕри! Ĕмĕрхи пекех, ун юрри çĕнтерӳ çинчен.

Çав юрăпа пуçланчĕ Мускаван август уйăхĕн пĕр кунĕн кăвак шуçăмлă ирĕ. Çĕр айĕнче поездсем ĕрĕхрĕç, çĕр çинче — трамвайсем, троллейбуссем, автобуссем. Пурте вĕсем çамрăксене теçетки-теçеткипе ĕç участокĕсене илсе ситерчĕç.

Воскресникре тухнисенчен пурте тенĕ пекех 17 çулхипе 25 çул хушшинчи çамрăксем. Арçын ачасенчен ытларах хĕрачасем. Вĕсем те арçынсенчен юлмарĕç.

Унта-кунта, ватăсем тĕл пулчĕç. Вĕсенчен пĕри Сидельников. 1918 çулта вăл Хĕрлĕ площадьре Ленин паянхи çамрăксен пысăк пуласлăхĕ çинчен каланине итленĕ. Вăл, 1919 çулта Хусан чугунçулĕ çинче пулса иртнĕ чи малтанхи субботникре Ленин мĕнле хастарлăхпа ĕçлени çинчен каласа парать. Унăн çамрăклăхĕ граждан вăрçин çулĕсенчи йывăрлăхсене çĕнтернĕ.

Унтанпа 22 çул иртрĕ — вăл алла сывхарать. Хăй вăл хăйĕн çулĕсенчен те ватăрах. Çамрăклăх çав-çавах, хăй Ленинпа юнашар тăрса ĕçленĕ чухнехи пекех, çамрăк, вăйлă, вĕри, —эпир ывăнма пĕлмесĕр йывăççем каса-каса ятăмăр, çĕр чаврăмăр, чуллă çăртсене аркатрăмăр. Мĕн вăл йывăç е темиçе ĕмĕр хушши пирченсе хытнă çĕр? Укçа мар чул, кăсрĕ, çамрăклăх чул кăсрĕ, тимĕр вакларĕ.

Н-ски заводра пĕр васкавлă ĕçе тума ĕçлекенсем пĕр пин таран кирлĕ пулнă. Завод карташне виççĕр çамрăк пырса кĕчĕç. Çĕрĕпе хатĕрленнĕ хыççăн ĕç кăвак шуçăмлах вĕреме тытăнчĕ. Çав ĕçре пулнă Сергей Корольков çапла каласа пачĕ:

— Ĕç сăмахсăр пуçланчĕ. Виççĕр çын хăйсен участокĕсенче утса мар, чупса ĕçлерĕç. Апат çинчен маннă, аса илекеннисем ĕç вăхăтĕнчех çикелеме ĕлкĕчĕç. Уксен-тусан çавăнтах сиксе тăрса малалла чупрĕç, суранланаканнисем сийĕнчех кĕписене çурса суранĕсене çыхрĕç те чăрăнса тăмасăр ĕçлерĕç. Кĕлетке-çурăм тарланине, алăсем хăпарса тухнине шута илмен.

Каç пулса, килчĕ. Хăйсен ĕçĕсене малтантарах пĕтерекеннисем юлташĕсене пулăшрĕç. Çапла виççĕрĕн пин çын тăвас ĕçе вăхăтра ĕлкĕртрĕмĕр. Ку кун эпĕ хамăн пултарулăха виçрĕм. Ку кун эпĕ пурăнма пуçларăм.

Сергей Корольков çирĕме те çитеймен, шурă сăнлăрах, типшĕм, çуллĕ çамрăк. Эпир унпала пĕр институтра вĕреннĕ иккен. Тĕл пулмалла пулнă, пĕрре темшĕн, ятласса та пăхнă. Пĕлмен пĕр-пĕрне, пĕр-пĕрне пирĕн хамăр институтăн сийĕ çинче пĕлме тӳр килчĕ. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе вăл çĕрелле пăхрĕ — хăйĕн дифференциалĕсемпе интегралĕсене аса илчĕ тĕр, вăхăчĕ-вăхăчĕпе кăвак пĕлĕт çинелле тинкерчĕ.

Каçхине вăл Гитлер çăханĕсем килессе сыхларĕ, кăнтăрла пулеметран теме вĕренчĕ, ĕçлерĕ.

Пĕтĕм Мускавĕпе воскресникре вăл кун утмăл пинĕн ĕçлерĕç вĕсем, Сергей Корольковсем. Кашни сахалтан та 10 тенкĕ ĕçлесе илме пултарнă пулсан, пĕтĕмпе 6 миллион тенкĕ укçа! Пĕтĕмпех вăл оборонăшăн.

Кам çав кун туна ĕçе виçме е, хаклама пултарĕ? Никам та! Тата кама вăл кирлĕ? Мускавра, икĕ уйăх ĕнтĕ ĕçе укçапа хакламаççĕ, ĕç норми те Мускавра çук. Патриотизм ĕçе хаклать, патриотизм — ĕç норми!

Çапла ĕç фронтĕнче.

Çапла çапăçу хирĕсенче Фролов красноармеец группине фашистсен çарĕ сырса илнĕ. Парăнасси çинчен никам та шухăшламан. Кашни вĕсем хăйсен вырăнĕсенче мĕн чун-чĕм юлмиччен çапăçаççĕ — тăшманăн пĕр роти пĕтĕмпех пĕтет, çапăçу пĕтмест. Вĕсем, çине тата тепĕр рота пырса кĕрет. Çапăçу çĕнĕрен хĕрет. Çĕнĕрен килнĕ рота та сайраланать. Çав вăхăтрах Фролов юлташĕсем те пĕтеççĕ Фролов, пĕччен. Хăй çине пырса кĕнĕ тăваттă фашиста вăл виксе пăрахать. Малта, хыçра татах та фашистсем. Вĕсем кăшкăрнă:

—, Рус, парăн. Çавах чĕрĕлле илеттĕр.

— Рус парăнмасть! — тавăрнă Фролов.

Çаврăна-çаврăна револьвертен вăл тата 4 фашиста персе пăрахать. Хăйне валли те патрон юлмасть, хăйне вăл кĕсйинчи бритвипе пырĕнчен касса вĕлерет.

Кайран, çапăçу вырăнĕнчен, нимĕçсем кайсан, Фролов юлташĕ хăй вырăнĕнчен тăрать. Ывăр аманнипе вăл малтан туймасăр, выртнă. Тăн килсе кĕрсен, вăл хăй тавра мĕн пулса иртнине курать, çав вăхăтрах хăй чĕрринче палăртмасть. Нимĕçсем ăна вилнĕ, тесе ун патне пыраççĕ, вĕсем курăнми пулса лăпланаççĕ. Вăл хырăмпа шăва-шăва вăрмана кĕрет, унтан, хăйĕн чаçне шыраса тупать. Вăл каласа янипе унăн юлташĕсем Фролова «парăнтарнă» фашистсене шыраса тупаççĕ те, каллех хĕрӳ çапăçу пуçланать. Халь Фролов пĕччен мар. Вĕсем малтан Фроловран юлнă, чунллисене шаккаççĕ, унтан çапăçу вĕçнелле килме ĕлкĕрнĕ тепĕр вĕр-сĕн вăллă рота тăраççĕ.

Ку, çӳлте каласа панă хыпар, фронтран юлашки кунсенче килнĕ хыпарсенчен пĕри: çамрăк Фролов çапăçура паттăрăн ӳкет пулин те, çамрăклăх çав-çавах çамрăк, вăйлă, вĕри. Вăл — унăн юлташĕсем. Вĕсем Фролов пекех паянхи çамрăксем. Вĕсем парăнтарчĕç!

Улăмрех, хăй вăхăтĕнче, халь тискер те хăрушă фашизма çĕнтернĕ çамрăксем те ватăлĕç, çамрăклăх нихăçан та ватăлмĕ. Хальхи çапăçусен хирĕсенче вăл халь тĕнче пĕлмен паха çимĕççем çитĕнтерĕ, уяр вăхăтра, çумăр кирлĕ чухне — çумăр çутарĕ, кирлĕ мар чухне ăна чарĕ. Вăл юханшывсене хăйне кирлĕ пек юхтарĕ, Арктика ăна пăхăнĕ, Вутлă Çĕр, ятлă утрав çинче унăн çĕнтерӳ юрри шăранĕ.

Çавăнпа та çамрăклăх — ĕмĕр çамрăк, теççĕ.

И. МОИС.

Мускав, август. 1941 ç.

Комсомолка-бригадир

I

Ку вăл икĕ çул каялла пулса иртнĕ. Древкомбинатăн кадрсен пайне çамрăк хĕрача пырса кĕнĕ. Вăтаннă пек пулнă вăл, чылайччен сăмах та хушайман. Кадрсен пайĕн начальникĕ ытти çынсемпе калаçу пĕтерсен хĕрачапа калаçма тытăннă.

— Эсир тата мĕнле ыйтупа? — ыйтнă вăл хĕрачаран.

— Ĕçе кĕресшĕн, — ответленĕ вăл. Начальник документсем ыйтнă. Унтан иккĕшин хушшинче калаçу пуçланса кайнă. Чăн малтанах хĕрача хăй ку тариннчен фабрик-заводсенче ĕçлеменни çинчен, унăн нимĕнле специальность та сукки çинчен каласа панă.

— Туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухсан, колхозра ĕçлеме пуçланă,—тенĕ вăл.

Начальник хĕрача документчĕсем çине тата тепĕр хут пăхса илнĕ.

— Ĕçлеме илме пултаратпăр, анчах чернорабочи вырăнне кăна, — каласа панă начальник. — Мĕнле шутлатăр?

Хĕрача килĕшнĕ. Ăна хăма çурăкан цеха ĕçе янă.

...Цехра машинăсем, станоксем кĕрлесе, янраса тăнă. Халь анчах пырса кĕнĕ хĕрача вĕсем çине пăхса тĕлĕннĕ.

Хĕрача детальсем, хăма татăкĕсем йăтнă, çӳп-çапсене тасатнă. Çав вăхăтрах шавлă машинăсем çине пăхса илнĕ. «Çакăн çинче ĕçлеме пуçласан, вара кам пулăп-ши эпĕ» тесе шухăшланă вăл. Ĕç пĕтес умĕн станочник патне пынă, вăл мĕнле ĕçлеме пуçлани çинчен ыйтса пĕлнĕ.

— Эпĕ те малтанах сан пек çеç ĕçленĕ. Каярахпа вĕренсе ситрĕм. Ситес кунсенчех акă техминимум кружокне вĕренме çӳреме пуçлатăн, — тенĕ бригадир-станочник хăйĕн подсобнăй работницине.

II.

Кун хыççăн кун иртнĕ. Данилова юлташ ĕç хыççăн ятарласах станочник патне юлса вăл ĕçленине пăхса çаннă. Техминимум кружок занятийĕсене пĕр киктермесĕр çӳренĕ, активлăн вĕреннĕ. Тепĕр чухне тата мастер патне пырса ыйтса пĕлнĕ. Пĕтĕм шухăш-кăмăлĕ те унăн станокпа ĕçлеме вĕренесси пулнă.

Хĕрача техминимум кружокĕнчен вĕренсе тухнă. Çакăн хыççăн мастер ăна хăй патне чĕнсе илнĕ те, каласа пуçланă.

— Сана эпир станок çине куçарасшăн. Мĕнле шутлатăн. Кăмăлу пур-и? — ыйтнă мастер Даниловăран. Хĕрача савăннипе кулса янă.

— Эпĕ хирĕç мар. Анчах пултарасси çинчен шанса калама пултараймастăп. Ăна хăвăр пĕлетĕр пуль, — ответленĕ Данилова юлташ.

Тепĕр куннех работница станок çинче ĕçлеме пуçланă.

III.

Цехăн иккĕмĕш хутĕнче пысăк рамăсем шавласа лараççĕ. Вĕсем кăма çураççĕ. Çурнă хăмасем обрезной станок патнелле куçаççĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр куçать хăма. Кунта вĕсене варринчен çураççĕ. Çурнă хăмасене тата малалла куçараççĕ. Çакăнпа ĕнтĕ пысăк улшăну пулса иртет. Хăмасене татаççĕ, çураççĕ, пĕчĕклетеççĕ. Тепĕр чухне 7—8 операци ытла пулать. Ĕç йывăр тата ответлă. Тĕрĕс виçе, йывăç пахалăхне лайăх пĕлни кирлĕ кунта. Вĕсене пĕлмесен часах брак пулать.

Çакăнта ĕçлет халь Данилова юлташ Пăхатăн та çак хĕрача çине, тĕлĕнетĕн: епле хăвăрттăн, çаврăнуллăн ĕçлет вăл. Ку та мар, халь вăл бригадир. Унăн бригадинче 6 çын. Лайăх результатсем тăвас пулсан, бригада членĕсем хушшинче те ĕçе тĕрĕс организацилемелле.

Ĕç яланах организованно пуçланать. Никам та никама кансĕрлемест, кашнин хăйĕн участок пур. Разметчица Л. Кирейкина обрезной станок патĕнчен килнĕ материалсене пăхса подсобнăй рабочине парать, лешĕ укладчицăна тыттарать. Укладчица М. Степанова станочница К Даниловăна, хăйĕн бригадирне, парса тăрать. Станочница ăна кирлĕ виçеллĕ татса е сӳтетсе калarать. Çак детальсем вара подручнăй Л. Маслова алли витĕр юнашарти торцовщица патне пыраççĕ. Торцовщица А. Максимова кашни детале тытса хăйне виçеллĕ туса татать. Çак операцине тин ку бригадăн ĕçĕ вĕçленет.

— Эпир пĕр-пĕрин патне пырса кансĕрлеместпĕр, ĕç конвейерла системăпа пулса пырать. Çакă вара кашни работницăнах хăвăртлăн ĕçлеттерет, — тет Данилова юлташ.

Смена пĕтсен бригада членĕсем пĕр çĕре пухăнаççĕ. Бригадир вĕсене паян мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартать.

— Ĕнер эпир плана 160 процент тултарнă. Ман шутпа паян ĕнерхинчен лайăхрах ĕçлерĕмĕр. Анчах ку пире кăшт та лăплантарма пултараймасть. Эпир ĕнтĕ паянхинчен те лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр, — тет бригадир. Унтан вăл уйрăм работницăсем мĕнле ĕçлени çинчен, малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен чăрăнса тăрать.

Древкомбинатри Прокопьев юлташ ертсе пыракан цехра халь хĕрарăмсем пысăк вăй пулса тăраççĕ. Кашни участокри ĕçрех вĕсем пур. Чылайăшĕсем бригадирсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте пĕр шухăшпа—стахановла ĕçлесе Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе тăрăшаççĕ. Бригадăсем хăйсене панă плана 120—200 процент тултарса пыраççĕ. Вĕсем ĕç вăхăтне сехетпе мар виçеççĕ, вĕсенчен мĕн чухлĕ продукци туса кăларма ыйтаççĕ, çавна пурнăçламасăр вĕсем цехран тухмаççĕ.

— Сехет вăл часах иртсе кайма пултарать. Çук, эпир хамăра панă задание пурнăçламасăр цехран тухмастпăр, каласа парать комсомолка-бригадир К. Данилова юлташ.

Çакăн пек ĕçлет икĕ çул каялла черноробочи вырăнне пырса кĕнĕ Ксения Данилова юлташ.

ХАР. ЛИСИН.

Сĕмĕрле.

Канаш районĕнчи сывлăха сыхлав пайĕн заведующийĕ А. М. Воробьева юлташ, вăл 1940 çултанпа донорта тăрать.

Е. Цыганов фотоўкерчĕкĕ.

Агитаци вăйĕ

Мăн Вылăри вулав çурчĕ çумĕнчи агитаторсен коллективĕнче пĕтĕмпе 12 çын. Акă вĕсем: Пелагея Семенова, Мария Никифорова, Ефимия Миронова, Мария Осипова т. ыт. те.

Пелагея Семенова, учительница, тăваттăмĕш бригадăри агитатор. Пушă вăхăтра вăл колхозниксемпе пĕрле тырă вырма тухать. Бригадăри стена хаçатне каларăмăр. Бригадир вĕсене паян мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартать.

— Ĕнер эпир плана 160 процент тултарнă. Ман шутпа паян ĕнерхинчен лайăхрах ĕçлерĕмĕр. Анчах ку пире кăшт та лăплантарма пултараймасть. Эпир ĕнтĕ паянхинчен те лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр, — тет бригадир. Унтан вăл уйрăм работницăсем мĕнле ĕçлени çинчен, малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен чăрăнса тăрать.

Древкомбинатри Прокопьев юлташ ертсе пыракан цехра халь хĕрарăмсем пысăк вăй пулса тăраççĕ. Кашни участокри ĕçрех вĕсем пур. Чылайăшĕсем бригадирсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте пĕр шухăшпа—стахановла ĕçлесе Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе тăрăшаççĕ. Бригадăсем хăйсене панă плана 120—200 процент тултарса пыраççĕ. Вĕсем ĕç вăхăтне сехетпе мар виçеççĕ, вĕсенчен мĕн чухлĕ продукци туса кăларма ыйтаççĕ, çавна пурнăçламасăр вĕсем цехран тухмаççĕ.

— Сехет вăл часах иртсе кайма пултарать. Çук, эпир хамăра панă задание пурнăçламасăр цехран тухмастпăр, каласа парать комсомолка-бригадир К. Данилова юлташ.

Çакăн пек ĕçлет икĕ çул каялла черноробочи вырăнне пырса кĕнĕ Ксения Данилова юлташ.

ХАР. ЛИСИН.

Сĕмĕрле.

Машинăсем ĕççĕр лармаççĕ

ÇĔРПУ. Çĕнĕ Салари «Красный бригадир» колхоз ыраш вырса пĕтерĕ. Кăçалхи çăлтăр вырса пĕтерĕ

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 30-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Кантăр-Хĕвеланăç Германи çине вĕçсе пырса тапăннă.

Англин авиаци министерстви кăларнă коммуникере çапла калана: иртнĕ çĕрле противникăн темиçе самолечĕ Англин Хĕвелтухăçĕнчи çыранĕ çине милсе тухнă. Икĕ пункт çине пăрахнă бомбăсем пысăк мар сиен туна, жертвăсем çук. Германин пĕр самолетне персе ӳкернĕ.

Германири радио фашистсене хирĕç тухса каланисем

СТОКГОЛЬМ. (ТАСС). «Социал демократен» хаçат çапла пĕлтерет: «Дейцланд зендер» ятлă вăрăм хумлă станци каласнă чух час-часах урăх сасă илтме пулать, августăн 25-мĕшĕнче вăл çапла пĕлтернĕ: «Нимĕç халăхĕ хĕвелтухăçĕнчи фронтра хăйĕн юнне юхтарать. Германия халех ĕнтĕ вăрçăра поражени тӳрĕ». Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсемпе финсен радиостанцийĕсем передачăсем нанă вăхăтра фашистсене хирĕç кун пек туса каланисене Швецире темиçе хут та илтнĕ. Хаçат малалла çапла çырать: «Паллах ĕнтĕ, çак сасă каланине питĕ итлеççĕ, мĕншĕн тесен вăл нимĕç халăхĕн сарлака массисем юлашки хыпарсене итленĕ чух илтĕнет».

ЛОНДОН. (ТАСС). Нимĕçсен «Дейчланд зендер» ятлă радиостанци передачине фашистсене хирĕç калакан сасă тытса чарни çинчен çак кунсенче пĕлтернĕччĕ. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: фашистла станци хăйĕн передачине мĕнле те пулсан пӳлсе пыракан сасса хуплас тесе пĕрмаях тăрăшать. Августăн 22-мĕшĕнче фашистсене хирĕç туса калани лайăхах илтĕнмен, августăн 23-мĕшĕнче паллă мар сасă юлашки хыпарсене паракан нимĕç дикторĕн сассине пĕтĕмпе тенĕ пекех хупласа илнĕ. «Юлашки хыпарсен передачи пĕтрĕ» — тенĕ диктор, çав секундăрах: «Анчах суясси ыран малалла пулса пырать»—тенĕ сăмахсем илтĕннĕ.

Лавальпе Деа çине тапăнни çинчен Франципе мĕн çыраççĕ

БЕРН, августăн 30-мĕш. (ТАСС). Францин 20 çулхи патриочĕ Поль Колетт шенисем Франципе ирĕклĕхе кăларма чĕнĕ пек янраса кайрĕç. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх Германие хирĕçле демонстрацисем пулса пыраççĕ, саботажла актсем пысăккăн ӳссе пыраççĕ. Германи оккупантчĕсене тата вĕсене Виши правительствинчен пулăшса пыракансене хирĕç кĕрешме чĕнсе калакан листовкăсем сарăлаççĕ. Çуртсен стенисем çинче çавăн пек çырнисем пулаççĕ: «Вишири сутăнчăксем тĕп пулччăр», «Тăван çĕршыва сутакансене вилĕм», «Колетта мухтав!», «Колетт—чăн-чăн француз» т. ыт. те. Çакăн пек ĕç пулса иртни çинчен каласа параççĕ: магазинсен пур хуçисене те витринăсенче Дарлан портречĕсене çĕнĕрен кăларса хума хушнă. Нумай торговецсем приказа пурнăçа кĕртнĕ, витринăсенче Дарлан портречĕсене кăларса çакнă, анчах кашни портрет айнех карточка хунă, ун çине «сутăннă» тесе çырнă.

«Большевиксене хирĕçле легиона» кĕме доброволецсене çырма чарăннă. Унта çыраннисене пурне те питĕ тĕплĕн тĕрĕслеме тытăннă. Гавас—ОФИ агентстви: «доброволецсен» казармисене полици пăхса тăрать»—тесе пĕлтерет. Ютçĕршывсен корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, полици «Большевиксене хирĕçле легион» членĕсене арестлеме тытăннă.

Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне малашне те туса ирттерер!

Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен воскресникне туса ирттересси çинчен ЦК ВЛКСМ панă сĕнĕве комсомолецсем çеç мар, пĕтĕм Совет Союзĕнчи çамрăксем, колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ ырласа кĕтсе илчĕç.

Чкаловски районра августăн 17-мĕшĕнче ирттернĕ воскресникре пурĕ 8146 çын ĕçленĕ, вĕсенчен 524 çын комсомолецсем пулнă. Кунсăр пуçне колхоз уйĕсенче пионерсемпе шкул ачисем 1301 ача ĕçленĕ. Воскресникре пурĕ 9464,43 ĕçкунĕ туса оборона фондне 383 центнер те 55 килограмм тырă, 450 тенкĕ укçан панă. Нумай колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне ирттерме питĕ лайăх хатĕрленнĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра Алексеев юлташ ертсе пыракан агитколлектив кашни бригадăрах пурин те воскреснике хутшăнма кирли çинчен каласусем туса ирттернĕ. Кунсăр пуçне комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне ирттерме чĕнсе листовкăсем кăларнă. Çавна май комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне колхозниксемпе ватă стариксем те хутшăннă. 66 çулхи Пельдасовăпа 70 çулхи В. Маньков юлташсем те воскреснике хутшăнса ĕçленĕ.

Августăн 17-мĕшĕнче ирттернĕ воскресникре Чкалов ячĕпе тăракан колхозран пурĕ 472 çын ĕçленĕ. Вĕсем пурĕ 550 ĕçкунĕ туса çĕршыв оборонин фондне 2.750 килограмм тырă панă.

Çавнашкалах «Маяк», Сталин ячĕпе тăракан, Ленин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те воскресник лайăх иртнĕ. «Кзыл юлдус» колхоз воскресникре 26 гектар тырă вырнă, 35 центнер аван çапнă, 21 гектар суха сухаланă, 18 гектар кĕр тырри акнă тата ытти ĕçсем те тунă.

Чăваш Ишакинчи учитель комсомолец И. Петухов юлташ воскресникре 2,75 ĕçкунĕ тунă, комсомолец Е. Сидоров ĕç нормине 150 процент, В. Пайуллина 175 процент тултарса ĕçленĕ. Воскресникре çул строительствинче Янтыков, Миневели, И. Марков, С. Медведев юлташсем ĕç нормине 200 процент тултарса ĕçленĕ.

Августăн 17-мĕшĕнче ирттернĕ воскресник районра питĕ организованно иртрĕ. Çак ĕçе организацилеме ВКП(б) райкомĕ тата пуçламăш парторганизацисем пысăк пулăшу пачĕç.

Р. ХАСЬЯНОВ.
ВЛКСМ Чкаловски райкомĕн секретарĕ.

* * *

ТАБАЙ. Комсомолăн пуçламăш организацийĕсем комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникне активлăн хутшăнчĕç. Воскресникре 689 комсомолец, 125 учитель, пионерсемпе шкул ачисем 3215 ача хутшăнса, оборона фондне пама 1515 ĕçкунĕ тунă тата 55 центнер тимĕр-тăмăр пухнă. Амалăхри «Горьковская Коммуна», Чӳтейри «Хурçă», Ишпуçĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче воскресник çавтери пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Сăкăлпуçĕнчи «Хĕрлĕ Октябрь» колхозри комсомолецсем, колхозницăсем тата пионерсемпе шкул ачисем пурĕ 295 çын воскресникре ĕçленĕ. Вĕсем 700 ытла ĕçкунĕ туса оборона фондне панă.

Çавăн пекех Тăмерти вăтам шкулри комсомолецсемпе учительсем те воскресникре лайăх ĕçленĕ. Комсомолка Барсукова юлташ ертсе пынипе пионерсем 2,5 центнер тимĕр-тăмăр пухса панă.

Ульянкăри «Шуçăм» колхозра 14 комсомолец 20 ĕçкунĕ туса оборона фондне панă. Комсомолка В. Васильева юлташ 35 тенкĕлĕх заем облигацийĕ, 10 çăмарта, пĕр килограмм сӳс, З. Туганова юлташ 95 тенкĕлĕх заем облигацийĕ, 50 килограмм çĕрулми çĕршыв оборони фондне панă.

Е. ДМИТРИЕВ.
ВЛКСМ Тăвай райкомĕн секретарĕ.

Горючисене перекетлессишĕн куллен кĕрешсе пымалла

Вăрçă условийĕсенче горючине перекетлĕн тыткалани уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Перекетлесе хăварнă кашни тонна горючи пирĕн Хĕрлĕ Çар валли каять.

Отечественнăй аслă вăрçăн хаяр кунĕсенче кашни тракторист, бригадир, комбайнер тата механик нефтепродуктсене ытларах перекетлесе, пирĕн самолетсем, танксем, бронемашинăсем валли хăварма тăрăшать. Çапла ĕçленипе вĕсем тăшмана хăвăртрах çĕнтерме пулăшаççĕ. Машинно-тракторнăй станцисенче нефтепродуктсене перекетлес тĕлĕпше социализмлă ăмăртăн пултаруллă çĕнĕ вăйĕ ӳссе пырать.

Шăхасан машинно-тракторнăй станцинчи трактористсем çурçул хушшинче 17 тонна ытла горючи перекетленĕ, çав хушăрах вĕсем, тракторпа ĕçлемелли плана ытлашшипех тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. 13-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Иван Моисеев юлташ) çурçул заданине 113 процент тултарнă, 3 тонна горючи перекетленĕ. Пĕрремĕш бригада (бригадирĕ С. Якимов юлташ) 2,5 тонна горючи перекетленĕ, çав бригадăри тракторист Илья Егоров юлташ хăйĕн сменинче 2 тонна ытла горючи перекетленĕ.

Пăрачкав машинно-тракторнăй станцинчи трактористсем пысăк çитĕнӳ тунă, вĕсем 9 пин тенкĕлĕх горючи перекетленĕ. Çĕмĕрле МТС-чи трактористсем 17 пин тенкĕлĕх перекетленĕ.

Машинăсене лайăх пăхса усранипе тата механизмсене тĕрĕс вырнаçтарса партнипе МТС-чи малта пыракан бригадăсем шĕвек топливăна перекетлесе хăварма пултарчĕç.

Трактосене пушăлла çӳреттересси пĕтересситĕн трактористсен тăтăшах ĕçлес пулать. Малта пыракан трактор бригадисем, тракторсене мĕнпур тулли вăйпа ĕçлеттерсе тата хаклă йышши горючие пĕр кумлам та сая ярас мар тесе тăрăшаççĕ.

Горючие перекетлĕн тыткаласа расходласси нумай чухне машинно-тракторнăй станципе трактор бригадисенчи нефтепродуктсен хуçалăхне мĕнле йĕркеленинчен килет. Тракторсене алăпа тирпейсĕр заправка туни, нефтепродуктсене расходланине кирлĕ пек учет туса пыманни — çаксем пулаççĕ горючие перекетсĕр тыткалани.

Хăшпĕр МТС-сенче татах та ытларах йĕркесĕрлĕхсем тĕл пулаççĕ. Унта горючине перекетлеме мар, йĕркесĕр нумай çунтарса пĕтереççĕ. Çавăн пек МТС руководителĕсен çакна ăнланса илмелле: горючисене йĕркесĕр ытлашши расходлани — çĕршыв умĕнче пысăк сиен туни пулать.

Кучухнехи вăрçă условийĕ тата тăван çĕршыв çакна ыйтаççĕ: кашни МТС, кашни трактор бригади, кашни тракторист тата комбайнер горючине перекетлĕн тыткалатăр.

Н. БОЧКАРЕВ.
ЧАССР Наркомземĕн топливо енĕпе ĕçлекен ответлă исполнителĕ.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен августăн 30-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ Германия оккупацинелĕ çĕршывсенче оккупантсене хирĕç кĕрешӳ пур çĕрте те сарăлса тата вăйланса пыни çинчен калакан фактсем çинче чарăнса тăнă, çав çĕршывсенче нумаях пулмасть оккупантсене хирĕç кĕрешес перспектива пачах шанчăкăр пек курăннă.

Гитлерла Германия Совет Союзне хирĕç туса пыракан вăрçăн 10 эрни хушшинче обстановка Гитлер атти-тапăнă пур çĕршывсенче те палăрмаллах улшăнчĕ. Халăхсем оккупантсене кураймасăр тарăхасси калама çук ӳсрĕ. Çакна ĕнтĕ вăл çĕршывсенче партизанла движени вăйланса пыни, саботаж туни, немĕç салтакĕсемпе офицерĕсене вĕлерни тата Гитлер агенчĕсене персе вĕлерни кăтартса парать. 10 эрне каялла Лавальпа Деа çине Колетт пăшалран пересси пулма пултарайман. Халĕ ĕнтĕ вăл факт пулса тăнĕ. Хаçатсем пĕлтерĕç тăрăх, «доброволецсем» хушшинче немĕç оккупантчĕсен тата Франци предателĕсен тăшманĕсене татах та палăртнă. Ĕлĕкрех Польшăра стачка пулма пултарайманча. Халĕ вăл Хржановри питех те хирлĕ чугунçул узелĕнче пулса иртнĕ. Кунсăр пуçне, Варшава çывăхĕнчи Пружков патĕнче чугунçул çинче пысăк катастрофа пулнă. Ĕлĕкрех Югославипе Грецире партизанла движени хальхи пек вăйлăн ӳссе пыма пултарайман. Немĕçсем партизансене хирĕç тискерлĕх, анчах та Польша халăхĕ пурăнать, вăл шăлне çыртса, малаллахи кĕрешӳ валли хăйĕн вăйне пухать. Польша халăхĕ ĕнтĕ 10 эрне каялла пулнă Польша мар. Совет Союзĕпе Польша правительствисем хушшинче килешӳ тунă хыççăн, Польша халăхĕн масси паттăр, хăюллă, шанчăклă пулма хавхалантаракан çĕнĕ пысăк вăй илчĕ. Польша халăхĕ фашистсене хирĕç кĕрешме çирĕп шухăш тытса çĕкленчĕ.

Мухтанса тата чаплăн кăтартса «çĕнĕ йĕркене» кĕртнĕ çĕршывсенчен нихăшĕ те Гитлер бандисем хаярлăн та ирсĕрĕн пуçпулса тăнипе килĕшмерĕ.

Европа халĕ ĕнтĕ нумаях пулмасть пулнă Европа мар. Геройла Хĕрлĕ Çар Германин тата унăн вассалĕсен мĕнпур хĕпăлланă вăйĕсен $^9/_{10}$ пайне хирĕç 10 эрне хушши ĕнтĕ калама çук паттăрлăн кĕрешни, ССР Союзĕнчи халăхсем хăйсен тăван çĕршывне пĕтĕм чĕререн парăнни тата хăйсен çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнмасăр пурăнас положенине çăлса хăварас тесе пысăк жертвăсем тума хатĕр тăни, хĕвелтухăç фронтĕнче Германи тата унăн союзникĕсем литĕ пысăк сухатусем туни, — çаксем вĕсем Европăн пусмăр айне тунă, анчах та пăхăнтарайман халăхсен шухăш-кăмăлĕсене çеклерĕç, вĕсен чĕрисене шанчăклăх хĕртрĕç тата Гитлерла Германие хирĕç кĕрешĕве сарса пыма психологиллĕ, политикăллă предпосылкăсем туса пачĕç. Гитлерпа унăн тарçисем вилме тивĕç — çакăн пек ĕнтĕ историн приговорĕ.

Республикăри уйхирсенче

Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз уйхирĕнче. Укерчĕк çинче: колхозник Антон Ефремов çĕмел тăвать.

Е. Цыганов фотоӳкерчĕкĕ.

Районсенчен пĕлтереççĕ

ВАРНАР. Кĕçĕн Кипек ялсоветне кĕрекен «Волга» колхоз çурхи тырăсене вырса пĕтертĕ. Тырпула пухса кĕртнĕ çĕрте, кулленех 211 çын ĕçленĕ, вĕсем пурте хăйсен нормисене тултарса пынă. Бригадирсем тырпула пухса кĕртнĕ çĕрте хастарлăн ĕçлерĕç. Вĕсем кулленех ĕç пăрахнă хыççăн производствăллă канашлусем туса ĕçĕн итогне сӳтсе-явнă тата кам мĕн чухлĕ ĕçленине çавăн чухнех каласа панă. Колхозра халь авăн çапаççĕ тата пахча-çимĕçсемпе технически культурăсене пуха кĕме хатĕрленеççĕ. Государствăна 22,1 центнер тырă леçсе панă.

И. ГРИГОРЬЕВ.

* * *

ВАРНАР. Пăваял колхозĕ 120 гектар çинчен кĕлте кĕртсе капана хывнă. Пин центнер ытларах авăн çапнă. 1941 çулăн государствăна тырă парса татнă. Колхозра халь çуртри выраççĕ, пурĕ 70 гектар ытла вырса пуçтартăмăр. Виççĕмĕш бригадăра ĕçлекен А. Григорьев юлташ кунне 450 кĕлте вырса çыхать. Кĕлте кĕртнĕ çĕрте ĕçлекен А. Какаков юлташ кунне 33 лав кĕлте кĕртет. Эпĕ хам та ытти колхозниксемпе танах ĕçлесе пыратăп. Кунне 51 çĕмел тăватăп тата 35 тĕм тырă выратăп.

Колхозник **И. КОРАКОВ.**

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Пур колхозсем те çурхи тырăсене вырма массăллăн тухрĕç. Çав вăхăтра кĕлте кĕртес, авăн çапас тата государствăна тырă леçсе парас ĕçсем сарăлса пыраççĕ. Халĕ 1.800 гектар çинчен кĕлте кĕртсе капана хывнă, 702 гектар çинчи тырăна çапса пуçтарнă. «Красноармеец» колхоз 686 гектар, вырса, 485 гектар çинчен кĕлтесене кĕртсе капана хывнă. «Искра» тата «Ударник» колхозсен кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех капана хывнă.

Кăçал ĕçлеме пултаракан колхозниксем пурте тырă вырма тухрĕç. Вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртă анлăн сарăлса кайрĕ. Кашни колхозник хăйне панă нормăна иртнĕрех тултарма тăрăшать. «Заря» колхозри пĕрремĕш бригада членĕсем 525 кĕлте, иккĕмĕш бригада членĕсем 425 кĕлте вырса çыхаççĕ.

Колхозсем пĕтĕм ĕçе организованно туса пыраççĕ. Тырă вырма тухсанах авăн çапассине организацилерĕç, чи малтан çапнă таса тырра государствăна леçсе панă.

Кăçал тырă вăйлă пулчĕ. Уйрăм колхозсем гектартан 20—22 центнер тырă туса илчĕç. Çакă вăл пĕтĕмпех агротехника кăтартнă пек ĕçленипе, ĕçе тăрăшса тунипе пулчĕ.

Г. ЧУМЕЙКИН.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

* * *

ÇĔРПУ. **(Хамăр корр.).** Машинно-тракторнăй станцин 15-мĕш номерлĕ трактор бригади «Совет», «1905 год» тата «Ударник» колхозсене ĕçлесе парать. Комбайнер И. Демяхин юлташ «1905 год» колхозра тырă вырать. Вăл кунне 26 гектар таран вырса пуçтарать. «Совет» колхозра икĕ кун çурăра 41 гектар çуртри вырнă. Машиновед Е. Осипов юлташ 6 кун хушшинче 84 тонна тырă çапрĕ.

Трактористсем ĕç нормине иртнĕрех тултарнипе пĕрлех, горючисене перекетлесе хăварассишĕн кĕрешеççĕ. Н. Ванюхин тракторист тырă вырнă çĕрте кашни сменăрах 5—6 килограмм горючи перекетлесе хăварать. С. Винокуров тракторист авăн çапнă çĕрте пĕр тонна çапнă хыççăн пĕр килограмм горючи перекетлет.

* * *

ШĂХАСАН. Машинно-тракторнăй станцинчи чылай трактористсемпе комбайнерсем ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса ĕçлеççĕ. Акă комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ Михаил Тимофеев ку тариннчен комбайнпа 130 гектар вырнă. Çуртри вырма тухнă кунран пуçласа вăл ĕç нормине 150—200 процент тултарса ĕçлет. Акă, августăн 28-мĕшĕнче вăл кунне 8 гектар, вырас вырăнне 17 гектар вырнă, августăн 29-мĕшĕнче те çавнашкалах ĕçленĕ. Комбайнер Ст. Осипов та тырă вырас ĕçре ытти сенчен малта пырать, вăл 100 гектар ытла вырнă.

Çавăн пекех Максимовпа Фадеев трактористсем сеялкăпа тырă акас ĕçре, Скворцовпа Васильев трактористсем авăн çапас ĕçре тухăçлă ĕçлеме пултарнине кăтартрĕç. Петр Максимов юлташ планпа 150 гектар акас вырăнне 217 гектар акнă, 8-мĕш бригадири Петр Васильев тракторист кунне 12 тонна çапас вырăнне 17 тонна авăн çапать.

В. Ч.

* * *

КАНАШ. **(Хамăр корр.).** Ялхуçалăх ĕçĕсем организованно пулса пыраççĕ. Пур колхозсенче те çуртри вырма тухнă. Кĕрхи тырăсем акмалли плана чылай иртнĕрех тултарнă. Вăрлăха пĕтĕмпех сеялкăсемпе акнă, çакна пула пур тĕлте те калчасем тинкĕсĕ шăтса тухрĕç. Чылай колхозсем кĕрхи çĕртме тума тухрĕç.

Вырăскас Пикшихри «Мотор» колхоз иртнĕ çулсенче, кая юлса пыратчĕ. Кăçал пачах урăхла. 213 гектар çинчи ыраша вăхăтра вырса пуçтарчĕ. Урпа, пăрса, ясмăк çапса пуçтарнă. 100 гектар ытла çуртри вырнă. Машинно-тракторнăй станци те «Мотор» колхоза пысăк пулăшу парать. Комбайнер Григорьев кашни кунах 10—15 гектар таран тырă вырать. Комбайн вырнă улăма хыççăнах пухса капана хываççĕ.

* * *

ЕТЕРНЕ. Засурскинчи «Красноармеец» колхоз кĕрхи тырăсене капана хывса çитернĕ. Колхозра халь çуртри выраççĕ тата авăн çапаççĕ.

Нумай колхозсем государствăна çăмарта, сĕт, аш-какай парса татрĕç. 16 колхоз государствăна çĕнĕ тырă нама пуçланă.

И. ЛЬВОВ.

Сĕт суса илессине ӳстернĕ

ТĂВАЙ. Мучарти «25 Октября» колхоз членĕ И. Шакшин юлташ 3 çул ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Унăн виçĕ ывăлĕ отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче немĕçсен фашистла варварĕсене хирĕç кĕрешет. Хăй вăл колхоз производствинче мĕнпур вăй-халне хурса ĕçлесе тăван çĕршыв оборонине тĕреклетет, Хĕрлĕ Çара фронтра çĕнтерӳ тума пулăшать. Ана яланах ирхи кунах каçчен выльăхсем патĕнче куратăн.

И. Шакшин юлташ выльăхсене пăхас ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ. Фермăра ĕçлекенсем валли ĕç йĕркине туса çирĕплетнĕ. Вăл, йĕркене кашни ĕçлекенех çирĕппĕн пурнăçласа пырать. Фермăри ĕçе тĕрĕс йĕркелени выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне чылай ӳстерме пулăшрĕ.

Кунта малтанхи вăхăтра ĕнесене талăкра 2 хут кăна, сунă тата ĕне çиллисене массаж туман пулнă. Халĕ И. Шакшин, юлташ ĕнесен çиллисене массаж тăвассине организацленĕ, ĕнесене пăхассине лайăхлатрĕ. Çакна май ĕнесене талăкра 3-шер хут сума тытăннă. Çапла вара ĕнесем сĕт парасси пумай ӳсрĕ.

Июль уйăхĕнче кашни ĕнерен 150-шер литр сĕт, суса илес вырăнне 256-шар литр сĕт суса илнĕ. Пĕр уйăхра мĕнпур ĕнесенчен планпа пăхнинчен 1868 литр сĕт ытлашши суса илнĕ.

В. ДАНИЛОВ.

Силос хываççĕ

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн бюровĕ августăн 27-мĕшпе сентябрĕн 7-мĕш хушшинче силос хывас тĕлĕшпе вуйăхунăх туса ирттерме йышăннă. Комсомолăн Ишлей районĕнчи организацийĕ силос хывас ĕçе хастарлăн тытăнчĕ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем вуйăхунăх пуçланичченех хăйсен вăйĕпе, планпа палăртнă 76 тонна вырăнне 86 тонна силос хывса хăварнă. Вунăкунлăх пуçланнă хыççăн, комсомол пуçламăш организацин секретарĕ Андреева юлташ ертсе пынипе 4 кун хушшинче татах 34 тонна силос хыврĕç.

Çĕньялти комсомолецсем те виçĕ кун хушшинче 12 тонна силос хывнă. Унсăр пуçне, 15 силос шăтăкĕ хатĕрленĕ.

Колхозри стариксен ĕç тухăçлăхĕ

ШĂХАСАН. Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă кунĕсенче колхозниксем ĕç фронтĕнче хастарлăн ĕçлеççĕ. Каçал колхозăн ял пур ĕçсене те йĕркелĕ тата вăхăтра туса пырать.

Районри колхозсем халĕ çур тырри выраççĕ, авăн çапаççĕ, кĕлтесене капана хываççĕ, кĕрхи акана вĕçлеççĕ. Лашасен тата колхозниксен пĕр пайĕ ĕçрен пушаннă май, чылай колхозсем кĕрхи çĕртме тума тухрĕç, государствăна тырпул леçме, массăллăн тытăнчĕç. Шăхасан районĕнчи колхозсем государствăна тырпул тăратмалли плана нумайĕшĕ тултарнă.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз государствăна поставка шучĕпе 124,01 центнер, натуроплата 65,98 центнер панă. Ворошилов, Сталин ячĕпе тăракан тата «Большевик» колхозсем тырпул хатĕрлев планне тултарнă.

Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарассишĕн ялхуçалăх çулĕн мĕнпур, ĕçĕсене пысăк хăвăртлăхпа тата лайăх вĕçлессишĕн пыракан ăмăрту кашни кунах вăйланать. Кĕрхи тырпулсене пухса кĕнĕ тапхăрта уйхирте ĕçлекенсенчен нумайĕшĕ ĕç нормисене иртнĕрех тултарнă. «Прожектор» колхозри, 62 çула çитнĕ колхозник Антон Прокопьев юлташ иртен пуçласа касченех уйра ĕçлет, ĕç нормине 150—160 процент тултарать. «Красный партизан» колхозри 68 çула çитнĕ колхозница Александра Тараканова юлташ 60 тĕм вырас вырăнне 70 тĕм вырать. Шĕкĕрти «Красный пахарь» колхозри 67 çула çитнĕ Иван Шушков юлташ кăнтăрла тырă вырнă çĕрте ĕçлет, çĕрле колхоз амбарĕсене хураллать. «Активист» колхозри 14 çулхи хĕрача Екатерина Иванова норма тăрăх 45 тĕм вырас вырăнне 120 тĕм вырса пынă.

Çакăн пек примерсем питех те нумай. «Березовка» колхозра кăна 40 колхозница ĕç нормине иртнĕрех тултараççĕ. Паллах, ĕç тухăçлăхне хăпартас ĕçре столовăйсем ĕçлени, ача çăчĕсемпе площадкисене уçни пулăмшать. Кăçал пĕрлешӳллĕ столовăйсене 50 колхозра, ача ясличсене 80 колхозра организацленĕ.

Кунсăр пуçне çĕршер, агитаторсемпе политтечĕсем большевикла агитаци ĕçне туса пыраççĕ. Çĕнĕ-Чулкасси ялсоветĕнчи «Новая жизнь» колхоз колхозникĕсем ĕç пĕтсен, каçхине, радио тăрăх юлашки хыпарсем итлеççĕ. Политикăллă-массăллă ĕçе ваан организацилеппне пула, Киров, Чкалов, Куйбышев ячĕпе тăракан, тата «Память Ильича», «Пионер», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем те уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлеççĕ. Тырпулсене планпа палăртнă сроксенче пухса кĕчĕç.

В. ЧЕРНОВ.

Выльăх апачĕ ытларах хатĕрлеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Колхозсем улăх тата çаран утисене тирпейлĕн çулса пуçтарса капана хывса хăварчĕç. Çавнашкалах клевер утине те аван пухса кĕчĕç. Утă кашни колхозрах çителĕклĕ пулать.

Анчах колхозсем унпа лăпланса ларманнăç, вĕсем выльăхсем валли ытти апатсем те хатĕрлеççĕ. «Волна революции» колхоз 25 лав çулçăллă апат хатĕрленĕ, 30 тонна силос хывса хăварнă. «Машина» колхоз 120 тонна хывса, плана темиçе хут иртнĕрех тултарнă. Çакăн пекех Тельман ячĕпе тăракан колхоз — 25 тонна, Мăн Чурашри «Прогресс» колхоз — 50 тонна, Çуткӳлти «Восход» колхоз — 30 тонна, Шуркассинчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз — 60 тонна, Юрмекейкинăри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз — 30 тонна, Пакăшри «Красный партизан» колхоз 25 тонна силос хывнă.

Районра кун пек примерсем сахал мар.

Як. СИГАЙ.

39.930 литр сĕт

ЕТЕРНЕ. Кăçал «Пионер» колхоз ферминчи дояркăсем кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.700 литр сĕт суса илме пăхнă. Дояркăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынă май, сĕт сăвассине уйăхран уйăха ӳстерсе пынă. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ фашизма çĕмĕрсе тăкма халăхăн пĕтĕм вăйĕсене пухма чĕнсе калана хыççăн, Анисия Иванова, Марфа Иванова, Анна Трофимова дояркăсем сĕт сăвассин çулталăкри планне 8 уйăх хушшинче тултарма хăйсем çине обязательство илнĕ. Илнĕ обязательствăна вĕсем ĕçпе пурнăçларĕç. Августăн 25-мĕш тĕлне вĕсем 22 ĕнерен 39 930 литр сĕт суса илсе, çулталăкри плана ытлашшипех тултарнă.

Государствăна сĕт памалли плана март уйăхĕнче, аш-какай памалли обязательствăна июнь уйăхĕнче тултарнă.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5555

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 406. Ф. б. 98. 84 п. л.